24-мĕш çул тухать. Хакĕ 15 пус.

1941 ИЮНЬ 12 КĔҪНЕРНИКУН 135 (5851) №

ЧĂВАШ КОММУНИ

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАҪАЧĔ.

Колхозсен уйхирĕсенче çумкурăксем пулмалла мар

Республикăри колхозсем, кăçал çанталăк чылай начар тăчĕ пулсан та, çуракипе ăнăçлăн ирттерчĕç. Нумай колхозсем ку ĕçе кĕске срокрах тата пысăк пахалăхпа вĕçлерĕç. Вĕсен ячĕсем республикăри Хисеп хăми çине кĕме тивĕçлĕ пулчĕç.

Пур районсенчен те колхозсен уйхирĕсенче калчасем лайăх çитĕнни çинчен пĕлтерессĕ. Ыраш калчисем кĕпеленме пуçланă, малтантарах акнă çуртрисем пит лайăх, тип-тикĕс, пĕр каррăн шăтса тухрĕç.

СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ тырпул тухăçне тата выльăх-чĕрлĕх продуктивлăхне ӳстернĕшĕн колхозниксене ĕçшĕн хушса тӳлемелле тăвасси çинчен йышăннă постановлени колхозниксене хавхалантарса пырать. Ку постановлени çураки ĕçĕнче çĕнĕ вăй-хăват пачĕ, колхозниксен хастарлăхне çĕклерĕ. Колхозсенче, бригадăсемпе звеносенче социализмлă ăмăрту анлăн сарăлчĕ. Колхозниксен çуракинчи ударлă ĕçĕ хăйĕн çимĕçне парĕ—вăйлă тырпул çитĕнĕ.

Анчах çакна астумалла: тырă акса хăварнипех ĕç пĕтмест. Вăл ĕçĕн пуçламăшĕ кăна. Вăйлă тырпул туса илес пулсан, калчасене пăхас ĕçе лайăх йĕркелемелле, тырпула кĕске срокра пухса кĕмелле. Çавăн чухне тин вăйлăн çитĕннĕ тырпул шанчăклă амбарсенче пулма пултарĕ.

Халĕ ĕнтĕ, тырпула акса пĕтернĕ хыççăн, колхозсен умĕнче тăракан пысăк задача—вăл лайăх шăтса тухнă калчасене тимлĕн пăхса ӳтересси пулать. Кăçал нумай вăхăт хушши çанталăк йĕпе-сапалла тата сивĕ тăни çумкурăксене ĕрчеме лайăх майсем туса пачĕ. Çумкурăксем нумай ĕрчени, хăйсенчен, ялхуçалăхне сиен кӳрекен хурткăпшанкăсене йышлăн сарăлма май парать. Çаксене шута илсе, кăçал кашни колхозрах калчасене çумкурăксем пусса илесрен тата ялхуçалăхне сиен кӳрекен хурткăпшанкăсем ĕрчесрен хытă сыхламалла пулать.

Çумкурăксем социализмлă ялхуçалăхне пысăк сиен кӳреççĕ, тырпул тухăçне çулленех вăтам шутпа сахалтан та 15—20 процент таран чакарса пыраççĕ. Малта пыракан колхозсем çакна лайăх ăнланнă. Хресченсем уйăм хуçалăхпа пурăннă чухне уйхирсенче çум çумлас йĕрке пулман. Халĕ нумай колхозсенче уйхирсене çумкурăксенчен тасатасси—йăлана кĕнĕ ĕç пулса тăчĕ. Комсомольски районри Карл Маркс ячĕпе тăракан, «Красный Октябрь», «Мăрат» колхозсенче çумкурăксене çумлама тытăннă та. Вĕсем кĕрхи тырă калчисене çумкурăксенчен тасатаççĕ. Шмидт ячĕпе тăракан, «Трактор» тата ытти колхозсенче нумай çул хушши ӳсекен куракăсем çинче çум çумлаççĕ. Çавăн пекех Доронин ячĕпе тăракан тата «Депутат», «Автогигант» колхозсенче те (Ишлей р.) клевер акнă вырăнсенче çумлаççĕ.

Çумкурăксене пĕтерес тĕлĕшпе колхозлă уйхирсенче çулленех пысăк ĕçсем туса ирттереççĕ. Ку тĕлĕшпе халичченех сахал мар ĕç тунă ĕнтĕ, тăваççĕ те: тĕрĕс пусуçаврăнăшсем туни, ялхуçалăх ĕçĕсене машинăсемпе туса пыни, çĕртме сухисене сухалани, йăрансене пĕтерсе пыни, таса та сортлă вăрлăхсемпе акни, тырпул акас тата пухса кĕрес ĕçсене кĕске вăхăтра, пысăк пахалăхпа вĕçлени, агротехникăна пурнăçласа пыни—çаксем вĕсем пурте çумкурăксене пĕтерсе пыма хăватлăн пулăшакан ĕçсем. Ку ĕçсем çулранçул вăйланса, анлăрах та анлăрах сарăлса пыраççĕ.

Пуринпĕр те палла: çумкурăксен сиенĕ пысăк. Вĕсем тырпул культурисене кирлĕ апат-çимĕçе, сĕткене, нӳрлĕхе пĕтереççĕ, тырпул тухăçне начарлатаççĕ, ялхуçалăх машинисемпе (уйăмах комбайнсемпе) ĕçлеме кансĕрлеççĕ, çĕре тислĕкпе е ытти имçамсемпе çемçетнин усăллăхне чакараççĕ; ялхуçалăхне сиен кӳрекен хурткăпшанкăсене ĕрчеме май параççĕ.

Социализмлă ялхуçалăхĕнче çумкурăксемпе кĕрешесси—политикăллă тата хуçалăхлă пысăк пĕлтерĕшлĕ ĕç пулса тăрать. Ку ĕç вăйлă тырпулпăн кĕреплĕ çĕрте палла сыпăх пулса тăрать.

Анчах, çав вăхăтрах, çак ĕçе чылай çĕрте тивĕçлĕн хакламаççĕ. Шупашкар, Сĕнтĕр, Ишлей, Куславкка, Комсомольски районĕсенче çум çумлас ĕçе кирлĕ пек йĕркелеме тăрăшман колхозсем сахал мар. Пĕлтĕр уйрăмăнах Комсомольски районра çумкурăксемпе начар кĕрешнĕ пулнă. Çавна пула ку районра хăшпĕр колхозсен тырпул тухăçлăхĕ те пысăках пулман. Çавăн пекех тата Шупашкар районĕнчи «Культура», «Трактор» колхозсенче тата Ишлей районĕнчи «20 лет Чувашии», «Прожектор», «Искра» колхозсенче иртнĕ çулта çумкурăксене хирĕç япăх кĕрешнĕ.

Çакăн пек тĕслĕхсем кăçал та пулма пултараççĕ. Хăшпĕр çĕртте халех çумкурăксем ĕрчеме пуçлани палăрать. Акă «Заветы Ильича» колхозăн уйхирĕнче (Комсомольски р.) кăçал çумкурăксем чылай тапса тухнă. Уйрăмăнах пĕлтĕр кĕрхи çĕртме туса хăварман çĕрте нумай çумкурăк ĕрчет. Çапла пулсан та, колхоз çум çумлама тухман-ха.

Кашни колхозрах çумкурăксем, ялхуçалăхне сиен кӳрекен хурткăпшанкăсем ĕрчесе каясран сыхланма ятарласа çынсем уйăрас пулать. Пахалăх комиссисен те çак тĕлĕшпе вăйлăн ĕçлени кирлĕ. Çумкурăксене çумлас ĕçе звеносем тăрăх йĕркеленĕ, ĕç вăйне тĕрĕс валеçнĕ, çавăнта кирек мĕнле ĕç те, çавăн пекех çумçумласси те, ăнăçлăн пулса пырать. Çумкурăксене çумласси—çăмăл ĕç мар. Ку ĕçе тума вăй нумай кирлĕ. Çав вăхăтрах ялхуçалăхĕн ытти ĕçĕсене те туса пымалла. Çавăнпа та колхоз руководителĕсен умĕнче ĕç вăйне пĕлсе йĕркелес задача анлăн туса тăрать.

Çумкурăксене пĕтерес тĕлĕшпе пур колхозсем те çине тăрса ĕçлени çукха. Пĕрисем çумлаççĕ, çав вăхăтрах теприсем çумкурăксемпе килĕшсе пурăнаççĕ. Çавна пула çумкурăксене пĕтерес тĕлĕшпе ĕçлекен колхозсенче те тепĕр чухне усă илеймеççĕ. Çăлтавăçумкурăксене пĕтерес ĕçе пур колхозсенче те, пур бригадăсенче те йĕркелĕ туса пыманнинче. Пĕр колхозра çумкурăксене пĕр курăк хăварми тасатнă вăхăтрах, кӳршĕри колхозра пусăсем сап-сарă та кăн-кăвак чечексемпе «илемленсе» ларараççĕ. Паллах ĕнтĕ, çум çумламан колхоз уйхирĕ—ытти уйсене çумкурăк саракан вырăн пулса тăрать. Çак çитменлĕхе кăçал тĕпренех пĕтермелле. Пирĕн уйхирсем культурăллă пулмалла.

Çум çумлас çĕрти тепĕр пысăк çитменлĕх—ĕçри пахалăхшăн çитĕклĕ таран кĕрешменни. Чылай çĕрте çум çумлас ĕçе çиелтен кăна туса ирттереççĕ, сарă чечексене çеç тата-тата тухаççĕ. Çумламасăр юлнă курăксем кайран часах калчана хупласа лартма пултараççĕ. Çавăнпа та çумкурăксене таса, тĕплĕн çумламалла.

Çумкурăксене çулсем, канавсем, йăрансем çинче те, вăрман хĕрринчи вырăнсенче те талккишпех тасатмалла. Çумланă курăксене уйра хăвармалла мар. Уйра хăварнă курăк куписем калчех çумкурăк саракан çăлкуçсем пулса тăраççĕ. Çумкурăксене силос тунă çĕре ямалла.

Çум çумлас ĕçе анлăн организацилеппе пĕрлех, çумкурăксене хирĕç ытти майсемпе те анлăн кĕрешмелле. Çумкурăксене пĕтерессишĕн пĕр вĕçрен, çĕвĕпех—калчасем шăтса тухнă кунсенчен пуçласа шăп кĕркуннеччен кĕрешмелле: çумçумлассине, тырпулсене кĕске вăхăтра ăнăçлăн пуçтарса кĕрессине, тырă вырнă хыççăнах хăмăла суханассине, кĕрхи çĕртме сухи тăвассине, вăрлăхсене сортласси-не—çаксене пурне те пур çĕрте те пурнăçласа пымалла. Çавăн пек ĕçлесен кăна çумкурăксене хирĕç ăнăçлăн кĕрешме пулать. Çакна тума агротехникăна ăнăçлăн пурнăçласа пыни кирлĕ.

Çум çумлас ĕçе анлăн организацилесси, вăл ĕçе конкретлăн ертсе пырасси—партипе советсен вырăнти организацийĕсен, çĕрĕç орăнĕсен ответлă задачи пулса тăрать.

Çум çумлама тытăннă

КОМСОМОЛЬСКОЕ, июнĕн 11-мĕш. (Телефон тăрăх). Çуртрисем те, кĕрхи тырăсем те пит лайăх, тикĕс ӳсеççĕ. Юлашки кунсенче уяр тăнă май калчасем хăвăрт ӳссе пыни сисĕнет.

Çуртри тырăсен хăшпĕр участокĕсем çинче çумкурăксем пурри палăрать. Уйăм колхозсем çум çумлама тухнă та ĕнтĕ. «Мурат» колхоз колхозникĕсем нумай çул хушши ӳсекен куракăсем акнă вырăнсенче çум çумлаççĕ. Çавăн пекех Карл Маркс ячĕпе тăракан тата «Красный Октябрь» колхозсенче те çум çумлама тытăннă.

Çумкурăксем «Заветы Ильича» колхозра чылай палăраççĕ. Иртнĕ çул кĕрхи çĕртме туса хăварман тата кăçал çуркунне сухаласа çуртри акнă вырăнта çумкурăксем уйрăмăнах нумай. Анчах ку колхоз çумкурăксене çумлама хатĕрленмен-ха. Иртнĕ çулта кунта çум çумлассине хирлĕ пек ирттермерĕç.

ИГНАТЬЕВ.

Клевер çинчи çумкурăксене тасатаççĕ

ИШЛЕЙ, июнĕн 11-мĕш. (Телефон тăрăх). Колхозсен уйхирĕсенче калчасем лайăх çитĕнеççĕ. Доронин ячĕпе тăракан колхозра, «Депутат» тата «Автогигант» колхозсенче клевер çинчи çумкурăксене çумлама тытăнчĕç.

Анчах районра çумкурăксене хирĕç кĕрешмен колхозсем те пур-ха. «20 лет Чувашии», «Прожектор», «Искра» т. ыт. колхозсенче иртнĕ çулсенче те çум çумлас ĕçе тивĕçлипе туса пыман, халĕ те çумкурăксемпе кĕрешме хатĕрленни курăнмасть.

АНТОНОВ.

Райçĕрĕç пайĕн заведующийĕ.

Тĕштырăсене вырса пухас ĕç

Казахстанра çĕрмамăк чечеке ларать, кукуруза чĕмăртанать, помидорсем çитĕнсе пыраççĕ. Колхозсенчи садсенче пысăк тухăçлă чейçырлисемпе панулмăсене, абрикоссене пухма пуçланă. Кĕрхи культурăсене вырса пухас ĕç анлăн сарăлса кайнă. 25 районра Заготпунктсене колхозсен çĕнĕ тырă тиенĕ обозĕсем пыраççĕ.

Колхозниксемпе единоличник-хресченсем хушшинче ытларах ĕçлемелле

☆ ★ ☆

Хĕрлĕ Çăран хăватне çирĕплететпĕр

ЕЛЧĔК. Тăрмăшри «Новый путь» колхоз членĕсем Виççĕмĕш Пятилетка (тăваттăмĕш çулхи кăларăм) Заема 3500 тенкĕлĕх çырăнса илчĕç. Пирвайхи виçĕ кун хушшинче подписка укçине 1200 тенкĕ пухрăмăр.

Пирĕн колхозра 3 бригада, кашни бригадăрах заем сарас тĕлĕшпе ĕçлекен уполномоченнăй пур. Зайцев юлташ пуринчен малта пырать. Вăл çĕнĕ заема 1300 тенкĕлĕх сарса, укçине 475 тенкĕ пухрĕ. Шемяков юлташ 1085 тенкĕлĕх сарнă, укçине 400 тенкĕ пухнă, эпĕ 1125 тенкĕлĕх сарса, заем укçине 325 тенкĕ пухрăм.

Эпир пĕр-пĕринпе ăмăртса ĕçлетпĕр. Июнĕн 20-мĕш тĕлне çĕнĕ заем укçине пухса пĕтересшĕн кĕрешетпĕр. Колхозниксем заем укçине хăвăртрах парса татма тăрăшаççĕ. Утмăл икĕ çулхи колхозник Чапуркин юлташ 50 тенкĕлĕх заем çырăнчĕ, укçине çийĕнчех парса татрĕ.

П. КОРОЛЬКОВ.

Заем сарас тĕлĕшпе ĕçлекен уполномоченнăй

Çĕнĕ заема 246.389 çын çырăнса илнĕ

Июнĕн 10-мĕш тĕлне Виççĕмĕш Пятилетка (тăваттăмĕш çулхи кăларăм) Заема пĕтĕм республикипе 246.389 çын 24.481.000 тенкĕлĕх çырăнса илнĕ. Уйрăмăн çакăн пек пулать: çырăнăçсыннисем 95,1 процент, урăхла каласан—79.737 çын, ялсенчи ĕççыннисем 65,4 процент, урăхла каласан, 166.652 çын çĕнĕ заема çырăнса илнĕ.

Подписка укçине пухас ĕç колхозлă ялта ăнăçлăн пулса пырать. Июнĕн 11-мĕш тĕлне пĕтĕмпе миллион та 339 пин тенкĕ пухнă. Вăл шутран: Хĕрлĕ Чутай районĕнче—127 пин тенкĕ, Чкаловски районра—100 пин тенкĕ, Шăмăршă районĕнче—91 пин тенкĕ, Çĕрпӳ районĕнче—90 пин тенкĕ пухнă. Ку ĕç Елчĕк, Калинински, Комсомольски, Шăхасан районĕсенче те ăнăçлăн пулса пырать. Кувакино, Октябрьски, Тăвай районĕсем чи кайри вырăнта тăраççĕ.

Массăллă ĕç çук çĕрте

Шупашкарти пристань коллективĕнче 177 çын. Вĕсен уйăхри ĕç укçи 50.500 тенкĕ. Анчах Виççĕмĕш Пятилетка (тăваттăмĕш çулхи кăларăм) Заема 31 пин тенкĕлĕх ытларах кăна çырăннă.

Партипе профсоюз организацийĕсем рабочисемпе служащисем хушшинче массăллă-ăнлантарууллă ĕçе тивĕçлипе туса пымаççĕ. Вĕсем заем сарас ĕçе организацилес вырăнне, вăл хăй тĕллĕн пулса пырасса шанаççĕ. Коллективри хăшпĕр çынсем заем пачах çырăнса илмен, вĕсене правительство йышăннă постановлени çинчен тĕплĕн ăнлантарса паман.

М. Д.

Ялсовечĕсен хисеплĕ ĕçĕ

Государство заемне колхозниксемпе единоличниксем хушшинче сарас ĕçре ялсовет исполкомĕсем пысăк вырăн йышăнса тăраççĕ. Вĕсен ĕççыннисем хушшинче политикăллă-массăллă ĕçе анлăн организацилесе пымалла, заем сарас тĕлĕшпе ĕçлекен уполномоченнăйсене пулăшмалла, вĕсен ĕçне ертсе пымалла тата заем укçине шухассине организацилемелле.

Республикăри ялсоветсен исполкомĕсем çак задачăна лайăх ăнланса илнĕ. Ăна Виççĕмĕш Пятилетка (тăваттăмĕш çулхи кăларăм) Заема сарас ĕç, подписка укçине пухас ĕç ăнăçлăн пулса пыни те лайăх кăтартса парать. Виççĕмĕш Пятилетка Заема кăларасси çинчен правительство постановлени йышăннă кыççăн пирвайхи икĕ кун хушшинче çĕнĕ заема иртнĕ çулти пĕтĕм подпискӑран чылай ирттерсе сарнă. Июнĕн 11-мĕш тĕлне республикăри колхозниксемпе единоличниксем хушшинче 6.461.000 тенкĕлĕх, иртнĕ çулхинчен пĕр миллион та 973 пин тенкĕлĕх ытла сарнă.

Виççĕмĕш Пятилетка (тăваттăмĕш çулхи кăларăм) Заема сарас тĕлĕшпе Хĕрлĕ Чутай районĕнчи Тарабайкасси ялсовечĕ, Çĕрпӳ районĕнчи Кĕçĕн Кипекçе ялсовечĕ, Шăмăршă районĕнчи Чепкас-Никольск ялсовечĕ, Калинински районри Мăн Явăш ялсовечĕ лайăх ĕçлерĕç. Вĕсем ялти мĕнпур ĕççыннисене заем çырăнса илес ĕçсене ăвăртрах, подписка укçине пĕтĕмпех пухса çитерчĕç. Çак тăваттă ялсовет исполкомне Чăваш АССР Совнаркомĕ 10—8 пин тенкĕ парса премилерĕ.

Калас пулать, нумай ялсоветсем малти рете тухассишĕн начар мар кĕрешеççĕ. Вĕсен шутне Кунер ялсовечĕ (Куславкка районĕ) кĕрет. Кунта çĕнĕ заема 7600 тенкĕлĕх сарса, укçине пĕтĕмпех пухнă. Арапуç ялсоветĕнчи (Вăрмар р.) колхозниксемпе единоличниксем 17.095 тенкĕлĕх çырăнса, паянхи куна подписка укçине пĕтĕмпех парса татнă. Çакăн пек лайăх ĕçлекен ялсоветсем пирĕн республикăра нумай.

Çакă вăл ялсовет исполкомĕсем государство заемĕсене сарас çĕрти хăйсен рольне лайăх ăнланса илнине кăтартса парать. Ялсоветсем заем сарас ĕçре чăн-чăн организаторсем пулса тăраççĕ. Вĕсем хăйсем тавра финанс активне пĕтĕçтереççĕ, актива партипе правительство йышăннă постановленисене пурнăçа большевикла кĕртсе пыма мобилизацилеççĕ.

Заем сарас тĕлĕшпе тунă пирвайхи çитĕнӳсене çирĕплетес пулать. Вăл тытса уракансем хушшинче кулленех ĕçлесе пыма кирли çинчен те манма юрамасть.

Июнĕн 7—8-мĕшсенче Петрозаводск хулинче Виççĕмĕш Пятилетка (виççĕмĕш çулхи кăларăм) Заемăн пĕрремĕш тиражĕ пулса иртрĕ. Кун çинчен ĕçсыннисене пĕлтермелле, вĕсене облигаци тăрăх тухнă выляв укçисене вăхăтра илме пулăшмалла. Тираж таблицине илсенех ялсоветсем сумĕнче справка сĕтелĕсем организацилемелле. Пĕр ĕççынни те хăйĕн облигацине тĕрĕслемесĕр ан юлтăр. Унпа пĕрлех заемсене тимлĕн сыхласа усрасси çинчен кашни ĕççыннине ăнлантарса памалла. Заема сыхласа усрамалли чи шанчăклă вырăн вăл—перекет касси.

Заем сарас тĕлĕшпе пирĕн ялсоветсем пуян опыт туянчĕç. Çак опытпа анлăн усă курса, подписка укçине срокра пухса çитерессишĕн хастарлăн ĕçлемелле. Анчах та чылай ялсоветсем хăйсен ĕçне тивĕçлипе туса пымаççĕ-ха, вĕсем ял бюджетне тултарассишĕн çителĕклĕн кĕрешмеççĕ. Кун çинчен çак примерсем те аван кăтартса параççĕ: Тукас ялсоветĕнче (Çĕмĕрле р.) пĕтĕмпе 623 колхозник, вĕсенчен заем çырăнса илнисем 191 çын кăна, 60 единоличникран 19 единоличник кăна заем çырăннă. Кунта подписка укçине пухма халĕ те тытăнман-ха. Пăрмас ялсоветĕнче (Куславкка р.) 80 çын çĕнĕ заема пачах çырăнса илмен. Ишлей районĕнчи 13 ялсоветĕнче халĕ те подписка укçине пухма тытăнман. Кун пек ялсоветсем Çĕрпӳ районĕнче 8, Етĕрне районĕнче 15 шутланаççĕ. Çак ялсовет исполкомĕсен председателĕсем бюджета пурнăçлассишĕн тăрăшмаççĕ. Паллах, вĕсем культурăллă ĕçсем валли палăртнă срокра укçа-тенкĕ парса тăма пултараймаççĕ. Унсăр пуçне, çак ялсоветсем СССР Наркомфинĕн инструкцине пăсаççĕ. Çак инструкци тăрăх колхозниксемпе единоличниксем заем çырăннă чухне е ун хыççăн 10 кун иртсен пирвайхи взноса тӳлеме тивĕç.

Кая юлса пыракан ялсовет исполкомĕсен çак кунсенчех хăйсен ĕçĕнчи ситменлĕхсене пĕтермелле. Государство заемĕсем социализм строительствинче, тăван çĕршывăн оборона хăватне çирĕплетес çĕрте мĕнтери пысăк вырăн йышăнса тăнине ĕççыннине тĕплĕн ăнлантарса памалла, финанс активне ĕçре куллен пулăшса пымалла. Заем çырăнса илесси кашни совет ĕççыннин тивĕçĕ пулса тăрать. Ялсовет исполкомĕсен çакна пурнăçа кĕртессишĕн чăн-чăн большевикла кĕрешмелле.

Ф. МИРОНОВ.

Заем укçине парса татнă

ШАХАСАН. Ойкас-Кипек ялсоветĕнчи колхозниксемпе служащисем хушшинче заем сарас ĕçе аван туса пыраççĕ. Заем кăларасси çинчен постановлени тухнă хыççăн, тăватă кун хушшинче, колхозниксем 10.300 тенкĕлĕх çырăнчĕç, подписка укçине пĕтĕмпех парса татрĕç.

Е. НИКИТИН.

СЕНТĔР. Урпаш ялсоветĕнчи «Хĕрлĕ паттăр» колхоз членĕсем çĕнĕ заема 3665 тенкĕлĕх çырăнса илчĕç. Июнĕн 4-мĕшĕнче подписка укçине пухса пĕтернĕ.

Н. КУЗНЕЦОВ.

Заем хроники

ЕЛЧĔК. Аслă Елчĕкри Ленин ячĕпе тăракан колхоз членĕсем çĕнĕ заема пит те пысăк хаваслăхпа çырăнса илчĕç. Тăватă кун хушшинче 20.650 тенкĕлĕх сарнă.

Хальхи вăхăтра заем уполномоченнăйĕсем подписка укçине пухаççĕ. Пĕтĕм колхозĕпе илсен, подписка укçине çурри ытла пухнă.

Е. МАРТЫНОВ.

ÇĔМĔРЛЕ. Турханти «Комбайн» колхозра подписка укçине 8.500 тенкĕ пухнă, заема 13.000 тенкĕлĕх çырăннă.

С. БАТЬКОВ.

ЧКАЛОВСКОЕ. Анат Туçари «Çăлтăр» колхоз членĕсем Виççĕмĕш Пятилетка (тăваттăмĕш çулхи кăларăм Заем кăларинче савăнăçлăн кĕтсе илчĕç. Малтанхи кунах 11 пин тенкĕлĕх сарса, тепĕр кун ирхине подписка укçине пĕтĕмпех тӳлесе татнă.

И. С.

3000 тенкĕ выляса илчĕ

ПЕРВОМАЙСКОЕ. Пялисов юлтан СССР Союзăн оборонине тĕреклетмелле заем тăрăх, 500 тенкĕлĕх облигацин 3000 тенкĕ выляса илчĕ.

Кăçалхи çул районри перекет кассăн выляв укçине пĕтĕмпе 22.800 тенкĕ тӳленĕ.

В. ДАВЫДОВ.

Лермонтов юбилейĕ умĕн

ТАВАЙ. Тĕмерти вăтам шкулта вĕренекенсем вырăссен аслă поэчĕ М. Ю. Лермонтов юбилейне хатĕрленме пуçланăранпа чылай вăхăт иртрĕ. Литература кружокĕ поэтăн творчестви çинчен занятисем ирттерчĕ, Лермонтов асăнса стена хаçачĕ кăларнă. Шкул дирекцийĕ поэтăн портретне ӳкерес унăн произведенийĕсем тăрăх картинăсемпе эскизсем тăвас, произведенисен лайăх вулас тĕлĕшпе конкурс ирттерет. Премисем лама укçа та уйăрнă. Июнь уйăхĕн юлашки кунĕсенче литература вечерĕ пулать. Конкурса тата вечера пуçăренекенсем те кĕтсе илме хатĕрленеççĕ. И. Сучков Лермонтовăн портретне тата «Белеет парус одинокий», «Дума», «Демон» произведенисем тăрăх эскизсем тунă.

М. ИВАНОВ.

СОВЕТ СОЮЗĔ ТĂРĂХ

☆ ★ ☆

УКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: Пĕтĕм Союзри ялхуçалăх выставкинче, Прибалтикăри республикăсен павильонĕнче. Н. Алексеев фото-ӳкерчĕкĕ (ТАСС).

1938 çулта кăларнă заемăн тиражĕ

Июнĕн 15-мĕшĕнче Одессăра Государствăн 1938 çулта кăларнă шалти заемĕн 18-мĕш тиражĕ пулать. Çак заемăн облигацийĕсене перекет кассисенче июнĕн 14-мĕшчен сутаççĕ. Июнĕн 15-мĕшĕнчен пуçласа, выигрышсен таблицисене иличчен, облигацисене сутма чарăнаççĕ.

Çак тиражра 11.503.200 тенкĕлĕх 17.040 выигрыш пулать, вăл шутран 25.000 тенкĕллĕ выигрышсем 12, 10.000 тенкĕллисем 60 выигрыш, 5.000 тенкĕллисем 360 выигрыш, 1.000 тенкĕллисем 3.600 выигрыш тата 400 тенкĕллисем 13.008 выигрыш пулаççĕ. (ТАСС).

Выльăх-чĕрлĕх валли консервланă сĕтеклĕ апат

„Коммунист“ колхозри агротехникăллă канашлу

КИЕВ, июнĕн 10-мĕш. (ТАСС). Киев районĕнчи «Коммунист» колхозра выльăх-чĕрлĕх валли çителĕклĕ апат бази тăвас ыйтăва татса парас тĕлĕшпе çине тăрса ĕçлеççĕ.

Ĕнер унта районри колхозсен председателĕсем, агрономсем, зоотехниксем агротехникăллă канашлăва пухăннă. Кун йĕркинче пĕр ыйту: СССР Совнаркомĕ «Колхозсенче выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕç валли апатсене ӳстерес тĕлĕшпе тумалли ĕçсем çинчен» йышăннă постановленине пурнăçа кĕртесси.

«Коммунист» колхоз председателĕ Хоменко юлташ клеверпа люцернăна консервлас ĕçри опыт çинчен каласа панă.

— Тепĕр 5—6 кунтан утă çулма тытăнмалла, — тенĕ вăл. — Пирĕн колхоз çак ĕçе пуçлама лайăх хатĕрленчĕ. Иртнĕ çулсенчи пример тăрăх эпир çулса илнĕ клеверпа люцернăн чылаях пысăк пайне консервласа хума тытăнатпăр. Клевер чечеке ларма пуçласанах эпир ăна çулма тытăнатпăр. Çав кунах çакă пулсан утăна пĕчĕк купасем туса хураттăр, вăл кăштах типиччен утă çав купасенчех выртать. Унта ăна ытлашши выртторсан, унăн пахалăхĕ чакать. Клевер мĕн тери сĕтеклĕ пулнине кура капана хунă чухне ун çинне тăвар сапаççĕ, иртнĕ çулта эпир пĕр тонна утă çине 33 килограмм тăвар сапнă.

«Коммунист» колхозăн опычĕпе канашлу участникĕсем питех те интересленнĕ.

Кăçалхи çул районри пур колхозсенче те клеверпа люцернăна консервлама йышăннă.

Канашлăва пухăннă çынсем «Коммунист» колхозăн—районра малта пыракан колхозсенчен пĕрин хуçалăхĕпе паллашнă, водокачкăна, тĕштырăсен хранилищине, парниксене курса çӳренĕ, ĕнесене электричествăпа сунине тата электричествăпа ытти ĕçсенче усă курнине пăхса çӳренĕ.

Союзри уйхирсенчи çураки

Июнĕн 5-мĕш тĕлне çĕршыври уйхирсенче çурхи культурăсене 84.860 пин гектар акнă. Плана 90 процент тултарнă. Çĕршывăн центральнăй районĕсемпе хĕвелтухăç енчи районĕсенче нумай вăхăт хушшинче сивĕ тăнă хыççăн çанталăк лайăхланнă. Колхозсемпе совхозсем çывăхри кунсенче çураки ĕçĕсене туса пĕтерме тăрăшаççĕ. Калинин облаçĕнчи колхозсем çурхи культурăçене акса пĕтернĕ. Белоруссире плана 96 процент тултарнă. Республикăри колхозсем çĕрулми лартса, йĕтĕн акса пĕтернĕ. Смоленскпа Иркутск облаçĕсенче çураки вĕçленсе килет, вĕсем плана 95 процент тултарнă.

Союзăн çенĕ республикăсенче—Литва, Латви, Эстони республикисенче уйхир ĕçĕсем ăнăçлă пулса пыраççĕ. Латви республики тырпул ахмалли плана 99 процент тултарнă.

Кăнтăр енче рис тата кая юлса акмалли, ăшша юратакан ытти культурăсене акса пĕтереççĕ, сарă табак лартаççĕ.

Колхозсем хĕвелçаврăнăш акса пĕтереççĕ: июнĕн 5-мĕш тĕлне 3 миллион гектара яхăн акнă—плана 96 процент тултарнă. Союзри 29 республикăсемпе крайсем тата облаççем плана ирттерсе тултарнă. Сахăр кăшманĕ акса пĕтереççĕ.

(ТАСС).

Совет Союзăн хулисем тăрăх. УКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: Киев. Крещатик. С. Рапорт фото-ӳкерчĕкĕ (ТАСС).

☆

Казак çамрăкĕсем призыва хатĕрленеççĕ

Тури Дон районĕнчи (Ростов облаçĕ) Казанская станицинчи оборона çурчĕ призывниксем хушшинче пысăк ĕç туса пырать. Хĕрлĕ Çар боецĕсем пулăм хатĕрленнĕ май, кунта çамрăк казаксем тĕл пеме вĕренеççĕ, çар уставĕсемпе паллашаççĕ. Хальхи вăхăтра станицăра призывниксен учебнăй групписене 4 группа организациленĕ.

Константиновский районри призывниксем çар ĕçĕпе тактика вĕренĕвĕсене ăнăçлăн хутшăннă.

Комсомолăн Аксай райкомĕ пуçарнипе Аксайпа Старо-Черкаск станицисен стрелковăй отрядсем организациленĕ. Çамрăк колхозник-призывниксен топографи ĕçне вĕренеççĕ.

ПАРТИ ПУРНĂÇĔ

Малтанхи утăмсем

КУКЕС. Апрель уйăхĕнче Шупашкар районĕнче пуçламĕш парторганизацисен отчетпа суйлав пухăвĕсем пулса иртрĕç. ВКП(б) райкомĕ отчетпа суйлав пухăвĕсен решенийĕсене тата коммунистсем панă сĕнӳсене шута илсе тăрăх пуçламĕш парторганизацисене ертсе пырассине чылай лайăхлатрĕ.

Отчетпа суйлав пухăвĕсенче коммунистсем ВКП(б) райкомĕ пуçламĕш парторганизацисен секретарĕсене тата вĕсен заместителĕсене партиллĕ-политикăллă ĕçе йĕркелеме сахал пулăшнине тата воспитани парас ĕçе ситĕкĕсĕр туса пынине кăтартса панă. Ку вăл ВКП(б) райкомне пуçламĕш парторганизаци секретарĕсемпе вĕсен заместителĕсене практикăллă ĕçре уллен ертсе пырассине вăйлатма хушнă.

Пуçламĕш парторганизацисенче отчетпа суйлав пухăвĕсем пулса иртнĕ хыççăн, парти райкомĕ çав пухусенче яшăннă решенисемпе коммунистсен ĕнĕвĕсене тĕплĕн шута илсе, пуçламĕш парторганизацисене ертсе пырасине лайăхлатас тĕлĕшпе чылай ĕçсем туса ирттерчĕ. Отчетпа суйлав пухăвĕсен материалĕсене тĕплĕн вĕреннĕ хыççăн, кашни пуçламĕш парторганизацине уйрăмăн ертсе пыманни, йышăннă решенисене пурнăçланине куллен тĕрĕслесе тăманни, райком инструкторĕсем пуçламĕш парторганизацисен секретарĕсене тивĕçлипе пулăшу паманни палăрчĕ. Халĕ ĕнтĕ парти райкомĕ пуçламĕш парторганизацисене ертсе пырас ĕçре инструкторсен ролĕ çĕклес тĕлĕшпе ĕçлеме тытăнчĕ. Çумай пулмасть пуçламĕш парторганизацисен секретарĕсен канашлуне туса ирттернĕ, унта секретарьсем хăйсем партиллĕ-политикăллă ĕçе мĕнле ĕркеленипе, пĕр-пĕрин опычĕпе палашнă. Çак канашлурах чылай пуçламĕш парторганизацисем хăйсен планнĕнче пысăк ыйтусене сиктерсе хăварнине, çĕнĕрен тунă пуçламĕш парторганизацисене парти райкомĕн инструкторĕсем çителĕксĕр пулăшнине каллех палăртма тивĕçтерĕ. Çапла, торфопредприятири пуçламĕш парторганизацине 941 çулти апрель уйăхĕнче тунă, анах та çак пуçламĕш парторганизацинче райком инструкторĕ Руднев юлташ май уйăхĕнче пĕрре те пулман. Çакăнпа хăвăрт пĕтерсе пырать.

Пуçламĕш парторганизацисен çĕнĕрен суйланă секретарĕсем хăйсен ĕçне нумай лайăхлатрĕç. Пуçламĕш парторганизаци секретарĕ Максимов юлташ партиллĕ-политикăллă ĕçе вăйлатас тата коммунистсен производствăри авангардлă рольне çĕклес тĕлĕшпе çине тăрсах ĕçлет. Çакна коммунистсем — Павлов, Кольцов юлташсем çуракинче хăйсен кулленхи нормисене 175—185 процент тултарса ĕçлени, агитаторсем кашни бригадăра, звенора куллен ĕçлени те лайăх çирĕплетет.

Пуçламĕш парторганизацисем тата уйрăм коммунистсем колхозниксемпе единоличниксем хушшинче партиллĕ-политикăллă ĕçе нумай лайăхлатрĕç. Ку вăл Виççĕмĕш Пятилетка (тăватăмĕш çулхи кăларăм) Заемне сарнă чухне уйрăмах палăрчĕ. Çĕнĕ заем бюджетне пăхнă планран ирттерсе тултарнă. Халĕ агитаторсем колхозниксемпе единоличниксене тырпула уйхиртен пуха кĕртме хатĕрленес, заемшăн тӳлемелли укçана срокчен тӳлесе татас ыйтусем çинчен ăнлантарса параççĕ.

Анчах та пуçламĕш парторганизацисене ертсе пырас ĕçре çитменлĕхсем те сахал мар. Пуçламĕш парторганизаци секретарĕсене партиллĕ-политикăллă ĕçе ертсе пыма куллен вĕрентмелле, ĕçре пулăшмалла. Çаксене шута илсе ВКП(б) райкомĕ çак кунсенче пуçламĕш парторганизацисен секретарĕсен семинарне туса ирттерме палăртнă. Семинарта партиллĕ пропагандăла агитаци ĕçне ертсе пырасси, пуçламĕш парторганизацисен ĕçне планласси, массăллă оборона ĕçне ертсе пырасси, коммунистсен пухăвĕсене хатĕрленес ирттересси тата ытти ыйтусем тăрăх инструктивлă докладсем пулаççĕ. Халĕ райком секретарĕсемпе отделсен заведующисем семинара хатĕрленнĕ май пуçламĕш парторганизацисен ĕçĕсемпе тĕплĕн паллашаççĕ.

Р. ТЕРЕНТЬЕВ.

Решенисене пурнăçа кĕртнине тĕрĕслесех тăмалла

КУВАКИНО. Пуçламĕш парторганизацисенче йышăннă решенисене пурнăçа кĕртнине йĕркеллĕ тĕрĕслесе тăрасан, ĕçсем ăнăçлă пулса пырассине ĕтме çук. Апла пулсан та Кувакино районĕнчи партин хăшпĕр организацийĕсенче хăйсен решенийĕсене пурнăçа кĕртнине тĕрĕслесе тăмаççĕ.

1940—1941 çулти отчетлă тапхăрта пуçламĕш парторганизацисенче сахал мар протоколсем çырнă, решенисем йышăннă. Анчах, калас пулать, чылай решенисем хут çинче çеç тăрса юлнă. Мирекнăри территориллĕ пуçламĕш парторганизаци çулталăк хушшинче хăйĕн решенине пурнăçа кĕртнине пĕр те тĕрĕслемен. Райпотребсоюзри парторганизацинче решенисене мĕнле пурнăçлани çинчен икĕ хутчен кăна сӳтсе-явнă.

Çакăн пек примерсем ытти организацисенче те пулнă. Хăшпĕр çĕрте решенисене ăнланмалла мар, час-часах коммунистсене мобилизацилеме пултаймайман решенисем йышăннă.

Кувакино райкомĕн оргинструкторски тделĕ юлашки вăхăтра çахнашкал итменлĕхсене пĕтерес ĕç çине ытлах çавăрăнса пăхма тытăнчĕ. Йышăнботниксен ĕçĕсене тĕрĕс учета илсе пыманнине палăртнă. Çак çитменлĕхсене сийĕнчех тӳрлетнĕ.

Оргинструкторски отдел парти райкомĕн тата çӳлте тăракан парторганизацисен решенийĕсене пурнăçа мĕнле кĕртсе пынине тĕрĕслесе тухнă. Тĕрĕсленĕ хыççăн фермăра ĕçлекенсем патне вунă çынни тата уйăхри плансене çитерменнине, çавнашкалах фермăри работ

ЛИТЕРАТУРА СТРАНИЦИ

АСАТТЕ КАЛАВĔ

„Лурнăçу чăтмалла мар йывăрланса çитсен те пурăнма пĕл, хăв пурнăçна усăллă тума тăрăш...
Н.ОСТРОВСКИЙ.

Асатте челемне майĕпен пăклаттарса ĕмнĕ май, лăпкан калаçма пуçларĕ.

— Ун чухне эпир, Чапаевпа пĕрле, Чишма станцийĕ патнех çитсе переннĕччĕ. Пĕлетĕн-и эсĕ, Чишма вăл Колчак полкисем Уфана çитиччен юлашки хут çирĕпрех тытăçса пăхас тенĕ юлашки вырăн пулнă.

Пĕрре мана кăнтăрлапа, дивизи штабне чĕнеççĕ. Анĕ лынă чухне штабра Чапаевпа комиссар Дмитрий Андреич иккĕшех лараççĕ. Вĕсем сĕтел çине карттă сарса хунă та, ун çине пăхса темĕн канашлаççĕ, карандашпа çырса йĕрсем тăваççĕ.

Вĕсем мана хăйсемпе юнашарах лартрĕç.

— Вот мĕн,—терĕ Чапаев,—маттур эсĕ, шурриссене хирĕç хаярăн çапăçатăн. Молодец! Белебея илнĕ чухне те шурриссен пулеметне чи малтан эсĕ туртса илтĕн.

— Ара, Чапаев юлташ,—тетĕп эпĕ,—савăн пек çапăçмалла çав пирĕн. Хамăршăн вĕт!

— Тĕрĕс калатăн, Кирилл Петрович,—тет комиссар та сăмаха хутшăнса,—эпир патша-улпутсемшĕн мар, Совет власĕшĕн, хамăран ирĕклĕ пурнăçшăн çапăçатпăр.

Чапаев мана хулпуççинчен лăпкаса илчĕ.

— Эсĕ пултараканччĕ. Малашне те пысăк ăнăçусем тума пултарăн эсĕ,—терĕ.

...Эпĕ разведкăна тухса кайрăм. Хам пĕтĕмпех çапкаланса çӳрекен çын пек тумлантăм: шăлапиртен çĕленĕ улача кĕпе, симĕс йĕм, пуçа çĕтĕк картус тăхăнтăм. Урана пушкăрт çăпати сыртăм. Çул çине валли ик-виçĕ чĕл çăкăр илсе хĕве чикрĕм.

Çанталăк шăрах. Хĕвел тӳсмелле мар пĕçертет. Çанçурăм тăрăх тар юхать. Утма йывăр. Çула çухатас мар тесе тата каялла тавăрăннă чухне те çакăнтанах килме ĕмĕтленсе, йĕри-тавралăха хытă сăнаса пыратăп, часчасах сăрт хĕррисене хăпара-хăпара пăхатăп, хăшпĕр вырăнсенче хама асăрхамалли паллăсем туса хăваратăп.

Чишма станцине çитесси ик-виç çухрăм кăна юлчĕ. Станцине каç пулсан тин кĕме шутласа, пĕр пĕчĕк вĕтлĕх вăрмана кĕтĕм. Эпĕ хама лармалли хӳтĕрех вырăн тума тытăннăччĕ. Сисмен те... çулçăсем чăштăртатни илтĕнчĕ. Çав самантрах ман умма ют çынсем туса тăчĕç. Икĕ шурă салтах хăйсен пăшалĕсене ман çинелле тĕллесе тăраççĕ.

— Руки вверх!—кăшкăрчĕ вĕсенчен пĕри.

Эпĕ алăсене çĕклерĕм.

— Аçта каятăн? Хăш ялсем? Мĕн ятлă?—тĕпчеме пуçларĕç хайхисем.

— Эпĕ,—тетĕп хам,—Вороновка салине, пуçана патне каятăп. Хам эпĕ Бикбулат ялĕсем. Пуçана ман вĕри чирпе алтраса ӳкнĕ, тет. Кайса курас терĕм-çке-ха. Арăм та ятлаçать, пĕлĕмӳ патне кайса курмастăн тет те...

— Ма суян?—сасартăк çухăрчĕ пĕри.

— А-а, большевик! Чапаевец!—терĕ тепри.

Самант! Эпĕ хам револьвере хăвăртăн туртса кăларса, пĕр салтакне кăкринчен шерсе вĕлертĕм. Вăл хыттăн ахлатса ӳкрĕ. Çав самантрах тепĕр салтакĕ ман çине сиксе ларчĕ. Ана та эпĕ хам çинчен сирсе вăркăнтартăм, пĕшалне çапса ӳкертĕм.

Куçĕсене чарса пăрахнă шурă салтак аллисене çĕклерĕ. Эпĕ ун аллинчен туртса илнĕ винтовка вĕçне ун çинелле туса тĕллерĕм.

— Атя, ут малалла!

Шурă салтак, аллисене çӳлелле çĕкленипех, утма пуçларĕ, эпĕ ун хыççăн пыратăп.

Ир. Шурăмпуç килнĕ вăхăта, эпĕ хам тытнă шурă салтака хамăрăн дивизи штабне илсе çитертĕм.

— Чапаев юлтăн!—терĕм эпĕ,—акă, чĕрĕ чĕлхе тупса килтĕм.

— Пит аван,—терĕ Чапаев мана.

...Асатте хăйĕн сăмахне вĕçлерĕ. Пĕр вăхăт хушши вăл никама нимĕн чĕнмесĕр ларчĕ. Н.Островский çинчен çырнă кĕнекене малалла вулама пуçларăм. Вăл тимлĕн итлет.

— Чим-ха, терĕ вăл мана. Вăл эпĕ уçса хунă кĕнеке страници çине пырса пăхрĕ. Эпĕ вулама чарăнтăм.

— Кăмăла килĕшрĕ-им?—ыйтрăм эпĕ асаттерен.

— Во!—терĕ асатте каллех, сылтăм чышкине хăй кăкăрĕ тĕлĕнче сулса илсе. Епле маттур çын вăл, Островский! Тĕрĕс калать. Астăвас пулать: кирек-мĕнле ăнсăртлăхсем сиксе тухсан та, вĕсенчен хăтăлма пĕлмелле. Ана тăвас пулсан, çынăн вăйлă та çăмăл, çавăрăнăсуллă, шур çипалана та час тавçăрса илекен пулмалла!—терĕ асатте.

СТ. АЛИМ.

Алишер Навои

ФАРХАД ÇУРАЛНИ

Кăçал Узбек халăхĕн аслă поэчĕ Алишер Навои çурални 500 çул тултарать. Çак юбилее уявласа ирттерме Узбек халăхĕ çеç мар, пĕтĕм Совет Союзĕнчи халăхсем те хĕрсех хатĕрленеççĕ. Аслă поэтăн вилĕмсĕр сăвви-юррисемпе поэзисене кашни халăх хăй чĕлхи çине куçараççĕ.

Паян эпир вуланасене Алишер Навои творчествипе паллаштарас шутпа «Фархадпа Ширин» ятлă поэмăн хăшпĕр паллăрах сыпăкĕсене илсе пичетлетпĕр.

...Ун керменĕ ларать пĕлĕте çитес пек.
Пĕр пĕччен уйăрлса вăл тăрать пуринчен те.
Ана пурнăç хăварнă ачасăр, пĕччен.
Унăн тронне шевле пек ахахран ерешленĕ,
Анчах, унта мар вĕт асал,—урăхра.
Сачĕ тулнă çĕр тĕслĕ хитре розăпа,
Анчах, çырлахмасть вăл кун пек розăпа.
Унăн пичĕпеле çуталать их тĕнче,
Анчах, куçĕсем çуттине йăлт çухатнă.
Тĕнченĕн пĕрпеклĕх ниçан та çук, тенĕ вăл.
Керменсем те нумай ĕмĕрсем ларас çук.
Нумай ĕмĕр ларан керменсем çӳллĕ мар.
Этем пĕр пин çул пурăнма пултарсассăн
Тĕнче хуçи пулĕ, ыр курĕ ялан,
Унтан вăл ăнланĕ часах тĕнчене.
Пĕлĕте çитиччен çĕкленен патша тронĕ
Хăмма пӳрчĕ çине кĕççе витнĕ кĕлмĕç
Иккĕшне те сирсе хăварать çĕр çинчен, —
Ма тесессĕн, вĕсен тымаррийĕ çинçе.
Тутасем çиччĕ—кăпăк, питре—хумĕсем.
Çарансем çийĕнче теменчул кипарис,
Анчах усси çук, вĕсем пурте хунавсăр.
Ерешленĕ çĕре кирлĕ çеç йывăçсен
Аçтан пултăр усси—вутă çеç вĕт вĕсем.
Шалкам çумăр çуса памасан шĕр-пĕр пĕлĕт
Вăл пушă тĕтре, тĕтĕм çеç сывлăшра.
Куçĕнчен куççуль мар, ахах юхнă тапса,
Юхтарашăн пулнă, куççуль мар,—ахах!
Çакăн пек ĕмĕтпе укçа тăкнă нумай,
Нимĕскер хĕрхенмесĕр вакланă сăмах.
Камăн ывăл пулман,—ăна тунă телейлĕ,
Камăн ашшĕ пулман,—вăл хăй пулнă ун ашшĕ.
Çакăм пек тунипе унăн пулнă пĕр ĕмĕт:
Çак ĕмĕт пулса—ывăл ашшĕ пулас.
Перо мĕн çырать, вăл пĕлмен çав ăна,
Мĕн çырни юлатех, эс ăна хуратаймăн.
Пĕр-пĕр ĕç çинче этем тухăç курсассăн,
Ана чăн-чăнах кирлĕ пек вăл илет.
О, хаклă чулсем, вĕсен тĕсĕ те хĕрлĕ!
Рубин пек курнаç, ална ил—хĕрлĕ кăмăк.
Чăнлăх çутипе çăмхалана çиппе,
Пурнăçăн пăрипе чĕрипе шăтарайнă.
Куççуль юхнă йĕрсем выртаç ун куçĕнче,
Сывлани пĕлтерет йывăр хуйхă çинчен,
Юратувăн çутти йăлкăштать самкинче,
Тата чăнлăх палли пулмалла питĕнче.
Ун тути уçлать кăмăл кулан хаваспа.
Вăл парать халăхне теменчул япала,
Ун пирки хуйхăпа пĕр тулать пысăк тинĕс.
Йăла тăрăх хитрен ерешлет çĕршывне,
Çавтери йăлтăрса тăрахан хаклăхпа.
Ĕçкĕ-çикĕ туса тĕлĕнтерчĕ пурне те
Кун пек çĕкĕне çӳл-тӳпе те курман:
Çĕр пайран пĕр пайне те калаймăн уçса.
Сĕтел çийĕн витти пĕлĕт евĕр пулса
Хĕвел евĕр вĕри çăкăр тăчĕ унта.

ИВ. МАЛГАЙ авторласа куçарнă.

ЯЛ СĂВВИСЕНЧЕН

1. ПИРĔН УРАМ.

Яла кĕретĕн. Унче...
Ялах-ши ку, пахча-ши?
Емешĕл йывăç çулçисем
Салам сунаç ачашшăн.

Урам тулли ӳсеç садсем,
Усет Мичурин сачĕ.
Унта çурхи чечек татса,
Ав, каччăсем утаççĕ.

Шап-шурă çĕмĕрт çурăлать,
Ешĕл тумра сирень, пилешĕ,
Сар кайăксем те юрăпа
Сана кĕтсе илеççĕ.

Хĕрсем серте татма тухаç,
Тухаççĕ те юрлаççĕ.
Шутлать канма кĕрен сухаç:
—Ик-виç ĕмĕр пурнасчĕ...

2. КОМСОМОЛ КОМИТЕЧĔН СЕКРЕТАРĔ КАЛАÇАТЬ

Тухса пăхарăка хирелле,
Е ял витĕр каярăм;
Сар тулă, çӳллĕ вирсене
Курса пуçа таярăм?

Ыраш пусси. Эп пĕчик мар,
Анчах кунта лутра мĕн.
Ун ăшĕнче пĕр чалăпран
Мана этем кураймĕ.

—Çапла çав,—терĕ секретарь,
Йăлт хамăр тунă, хамăр.
Ĕни те сĕт нумай парать,
Сыснисем те самăр.

Кашни яшĕкĕт вĕренет
Пĕр-пĕр ăстаç ĕçне.
Петя чутлать-тăк пĕрене,
Ванька та тимĕрнех...

3. КОЛХОЗ ПЕВИ.

Пĕве тăрăпа. Туллиех
Шап-шур хурсем ишеç.
Кунтах мăн Атăл пуллисем
Ерчетнĕ тет йышне.

Çак ялăн пысăк ĕмĕтсем,
Ун ĕçĕ те нумай.
Тытнать ыран, ака пĕтсен,
Водопровод тума.

Водопроводчик пур ялта,
Бетонщик та хăйсен.
Шыв юхĕ, юхĕ аялтан,
Кăтартнă вăл вăйне.

Ĕненмесен ик-виç кунтан
Пырса курма юратъ,
Епле садра кĕрлет фонтан,
Бульвар пулать урам...

Конст. КОЛЬЦОВ.

ÇУРКУННЕ

Килсе çитрĕ çуркунне,
Колхозниксем ирçинче
Утсем кӳлсе, хирелле
Тухса каяç акана.

Уй варринче трактурист;
Карлаттарса сухалать,
Хыççăн касси йăванать,
Сухи-сӳри пĕр çĕрте.

Трактор çинче хĕрача
Ларса пырать юрласа.
Савăнать вăл чĕрепен
Трактор çине ларнăшăн.

Выстанкăра вăл пулнă,
Сăмах пана Сталина:
— Гектар пуçне çĕрçирĕм
Пăт илетĕп!—тенĕ вăл.

Е. СКОРИКОВ-МАЛЬ.

Пысăк пахалăхлă произведенисем çырассишĕн

Литературăпа искусствăн чи лайăх произведенийĕсене хатĕрлес тĕлĕшпе правительство иртерекен конкурс пирки писательсемпе поэтсем мĕн калаççĕ

Октябрьти Социализмлă аслă революци 25 çул тултарнă тĕле литературăпа искусствăн чи лайăх произведенийĕсене хатĕрлесе кăларас тĕлĕшпе Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ йышăннă постановлени пире, литературăпа искусство фронтĕнче ĕçлекенсене, питĕ те хĕпĕртеттерчĕ.

Паллах, конкурс условийĕсем çăмăл мар. Конкурса тăратмалли произведенисем хальхи пурнăçпа сыхăнса тăра, унăн героикаллă событийĕсене нумай енлĕ тата тăрăн çутатса памалла. Çавăнпа та конкурса тăма шутлакан кашни писатель, поэт, драматург, художник паянхи рабочисен, колхозниксен, интеллигенцин, пионерсен, школьниксен пурнăçне, вĕсен шухăшкăмăлĕсене тĕплĕн пĕлмелле.

Çак конкурсра литературăпа искусство работникĕсем çеç мар, литературăпа, искусствăпа интересленекенсем те активлăн хутшăнассине, çĕнĕрен пултарулла авторсем тăтса тухассине ĕмĕтленетĕп эпĕ.

М. ДАНИЛОВ-ЧАЛДУН.

* * *

Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ Октябрьти Социализмлă Аслă Революци XXV çул тултарнă тĕле литературăпа искусствăн чи лайăх произведенийĕсене хатĕрлес тĕлĕшпе правительство енĕпе конкурс ирттерме йышăнни — партипе правительство совет литературипе искусствине аталантарассишĕн çавтери тимлĕн тăрăшнине тепĕр хут яруççăн кăтартса парать. Талантсемшĕн, пултарулăхшăн пирĕн тăван çĕршывра çул уçă. Эпир хамăра партипе правительство савса лăпкаса ӳстернине кашни кун туйса тăратпăр.

Пирĕн задача — партипе правительствăн çавăн пек юратуне тивĕçлĕн хаклама пĕлесси, хамăра ирĕке кăларнă Аслă Революцин XXV-мĕш уявне паха парнесемпе—литературăпа искусствăн чаплă произведенийĕсемпе кĕтсе илесси пулса тăрать.

А. КАЛГАН.

„СĂВĂСЕМПЕ ЮРĂСЕМ“

Чăваш АССР халăх поэчĕ, орденоносец Н. И. **Шелебин** хăйĕн 60 çулхи пурнăç тăршшĕнче пайтах нумай сăвăюрăсем хывнă. Унăн пултарулăхĕ ĕçпеле кĕрешӳн **сăвăнăçлă** кĕввисемпе тулса тăрать.

«Сăвăсемпе юрăсем» сборник ултă пая уйăрлать: «Çулпуçсене», «Çĕнтерӳ юррисем», «Сума суса», «Колхозлă ял», «Иртнĕ самана» т. ыт. те.

Пирĕн телейлĕ çĕршыври ĕççыннисене ирĕке кăларакан аслă çулпуçсене—Ленина, Сталина поэт чĕререн сума-суса саламлать. Пур шкул ачисемшĕн те паллă «Ленин» ятлă сăвăра вăл революцин геннийĕ çулпуçне—аслă Ленина аслă халăх хĕрӳ туйăмпа юратнине çапла сăнласа парать:

«Вут çулăмĕ пек
Чĕлхӳ-сăвару —
Епле сивĕнсе
Чĕнми пулчĕ-ши?
Теттĕм пуçлăхĕ —
Хăрушă вилĕм —
Епле сан патна
Хăйса пычĕ-ши?»

Ленинăн чи лайăх вĕренекенĕ, унăн пысăк ĕçĕсене малалла аталантарса пыракан хăватлă çын — **Сталин.** Вăл ертсе пынипе пирĕн çĕршыв ӳссе, тĕрекленсе пырать. Поэт çак аслă çынна саламлать. Совет **халăхĕ** калама çук пысăк ĕçсем туни çинчен Н. И. Шелебин çĕнтерӳ юррисем çырать, Сталина юратса хăйĕн ĕмĕтне кăтартса парать:

«Ахах пĕрчи хаклă, çырли тутлă,
Пухасчĕ кăмăл туличчен;
Сталин ячĕ аслă, юрри чаплă,
Юрласчĕ хăйĕн умĕнче»

(«Сталин», 18 стр.).

Польша панĕсен пусмăрĕнче асапланса пурăннă Хĕвеланăç Украинăпа Хĕвеланăç Белоруссири халăхсене ирĕке кăларнă паттăр Хĕрлĕ Çара мухтаса, поэт савăнăçлă юрăсем кĕвĕлет. Октябрьти аслă революци 20 çул тултарнине палăртса, пирĕн Чăваш республики пысăк çитĕнӳсем тунине, вăл малашне те, вырăс халăхĕ тăванла пулăшса пынине, пысăк çитĕнӳсем тăвассине ĕмĕтленсе юрлать. Унăн çак пысăк савăнăçне эпир «Республикăм савăн» ятлă сăвăра лайăх куратпăр. Вăл вырăс халăхĕн аслă писательне Максим Горькине, чăваш литературин никĕсене хываканĕсене—К. В. Иванова, Çеçпĕл Мишшине, Эльгере сума-сăвать; колхозлă ял пурнăçне, колхозниксен ударлă ĕçне ырлать. Кивĕ самана чухнехи ĕçкĕ-çикĕ юррисен кĕввине çĕнетет:

«Кĕрекисем тулăх,
Сăри лайăх,
Те сахăрпа тунă, —
Те пылпа?—
Сĕтел йĕри-тавра
Хăна вĕрлĕ;
Те юрлама пынă,
Те курма?»

(«Колхозра», 134 стр.).

Сборникăн «Иртнĕ самана» пайĕнче: «Çĕлен», «Раççей», «Чăваш арăмĕ», «Хăнара», «Васянка», «Çарăмсанра» ятлă произведенисем пуççăр тата «Эссепе» халлапа пичетленĕ. Ку халлапа содержани тата форма (чĕлхе) енчен те аван çырнă. «Эссепе» халăх творчествине (фольклора) сывăх произведени. Ахальтен мар ĕнтĕ кун пек произведенисене Н. И. Шелебин малашне те сырассине кĕтсе тăраççĕ пирĕн вулакансем. Ачасем валли тесе çырнă сăвăсене уйрăмах пахалама кирлĕ. Ачасен психологине аван пĕлсе тăни поэта вĕсен шухăш-ĕмĕчĕсене тĕрĕс кăтартса пама пулăшать («Тума пулнă — тăваткăр», «Хурçă çунатсем» т. ыт.). Н. И. Шелеби ачасен интересĕсене аван пĕлсе тăрать, çавăнпа та вăл ачасене ăнланмалла, вĕсене сывăх явленисем çинчен—йывăç-кураксем, кайăксем, çутçанталăк çинчен—аван сăвăсем çырнă («Çӳçе», «Шăнкăрчă», «Пыл хурчĕсен юрри», «Курак», «Чĕкеç» т. ыт. те).

Н. И. Шелеби сăввисемпе юррисен çĕнĕ кĕнеки содержани енчен çеç мар, кĕнекен пахалăхĕпе те япăх мар. Çапах та сборникри хăшпĕр çитменлĕхĕсем çинчен асăрхаттарса каварма тивет. Чăвашгосиздат сборниксене кăларнă чух писатель е поэт творчести çинчен ытлашши пысăк умстатьясем пичетлет, тепре чух тата, кирлĕ çĕртех статья çеç мар, комментарисем те памасть. Çакă вăл Н. И. Шелеби çырнă сăвăсен сборникĕнче лайăх курăнать. Литературăра 35 çул хушши ĕçленĕ поэт творчести çинчен унăн сборникĕнче пĕр сăмах та çырманни вулакансене кăмăлсăрлантарать.

Сборникра поэтăн чĕлхипе художествăллă форминче хăшпĕр çитменлĕхсем пур. Анчах вĕсем пире çамрăк чĕреллĕ ватă поэтăн—Н. И. Шелебин сăввисене юратса вулама пĕртте чармаççĕ.

А. ТЕРЕНТЬЕВ.

*) Н. И. Шелеби — «Сăвăсемпе юрăсем», Чăвашгосиздат, 1941 ç., 223 стр., хакĕ 4 т. 50 п., тираж 3000 экз. Редакторĕ Стихван Шавлы.

Поэт палăкĕ умĕнче

(„Лермонтов“ поэмăран)

Тарăхса эп йĕрмен,
Çилленсе макăрман...
Сан умра ман йĕпенчĕç куçсем!
Пурнăçра эс пачах
Ырлăх, чыслăх курман;
Ссылкăран ссылкăна çеç куçса,
Сӳннĕ сан чĕрери ĕмĕтсем.
Ман умра—бронза эс!
Бронзăланнă сан ят
Емĕтри ĕмĕрсен чапĕпе.
Ирĕк халăх сана,
Мухтавпа çĕклесе,
Асăнать чи паха тивлетпе.

Халăх чунĕ—хĕвел,
Ун чĕри—çутă çăлтăр, —
Уйăрать вăл ырра, усала та.
Княжна Мери çинчен
Вăл юмах юптарать,
Хĕрхенсе асилет Белăна та;

Асăнать Казбича,
Кăмăллать Вадима —
Юрату чечекне кушăрхатнăшăн
хурлăх...

Вĕсен терт-асапне,
Тăшмансен машкăлне
Тĕкĕр пек çынсем курĕç сан урлă.

Устерет сан чапна,
Бронзăланнă ятна
Ял, хула та, аул та хир-улăх...
Эс чĕр çын пек тăран,—
Кериб шаттăр çинчен
Халлапна та вулан пек хĕрӳллĕн...

Сан чапна вăй илсе,
Сан вăйпа çĕкленсе,
Хĕлхемленнĕ мĕнпур юрăç-сăвăç.
Хĕвел сăнлă тĕнчен
Чи таса çуттинче
Сан ятна ĕмĕрех сума-сăвăç!

МАКСИМ ЯСТРАН.

1940 ç.

Разведкăра

КАЛАВ

Шурă финсем пире хирĕç вăрçă пуçласан Вирьяловпа иксĕмĕр Карели перешеекне çитрĕмĕр. Мана аслă лейтенант ятне парса рота командирĕ турĕç, Вирьялов ман ротăн старшини пулчĕ.

Январь уйăхĕн юлашки кунĕсенче çанталăк сивĕтрĕ, виçĕ талăк хушши çилтăман ахăрчĕ. Вăл нумаях кĕттермерĕ. Пĕр каç лапка тăман çунă пирки сĕм тĕттĕм пулчĕ. Çав каç эпĕ каçхи шырава кайма шухăшларăм. Хамăн планпа взвод командирĕсене паллаштартăм. Вара шăп çурçĕр тĕлĕнче виçĕ станокла пулеметпа вăйлатнă икĕ взвода илтĕм те шурлăх урлă йăлтĕрсем çине ӳпне выртса, пĕчĕк ушкăнсемпе каçма пуçларăмăр. Икĕ сехет хырăмпа шунă хыççăн тин çĕр çине тухса вăрманта пухăнтăмăр. Эпĕ икĕ взвода уçланкă хĕрне илсе тухса сапаласа выртартăм, аяккалла дозорсем ятăм та, Вирьялова хампа пĕрле илсе, уçланкă хĕррипе выртакан канаври çула тĕрĕслеме кайрăм.

Канав тĕпĕ нумай утнă пирки таптакăр. Эпир Вирьяловпа пистолетсене алла тытса, çул тăрăх хуллен йăпшăнса утрăмăр. Кĕçех пирĕн ума бетонран тунă сарай евĕрлĕ çурт тухса тăчĕ. Çурчĕ хыçалтан пăхсан çеç курăнать. Хĕрлĕ Çар тăракан енчен пăхсан, чăтлăх вăрмана çеç курма пулать çак çурт вырăнче.

— Дот,—пăшăлтатрĕ Вирьялов.

Эпир тата çывăхарах упаленсе пытăмăр. Эпĕ планшет ăшĕнчен тĕттĕмре кăшт кăна палăрмалла çунакан хут кăларса ун çине Галькă сартăм та шыраса тупнă ДОТ-а ӳкерсе илтĕм.

Белофинсем пире кĕтмен пулас. Тимĕр бетонлă стена хыçĕнче ним сасчĕ те илтĕнмест. Анчах, ДОТ сывлăхĕнче тăни нимле усă парас çукние сиссе, эпир çул тăрăх каялла чакрăмăр.

— Кам та пулин иртмеллех ку çул па, кĕтсе пăхар,—терĕм эпĕ шăппăн. Анчах нумайччен кĕтме лекрĕ. Тĕнче кăвакарма пуçласан тин ДОТ енчен икĕ çын хыттăн каласа килни илтĕнчĕ. Пĕри палламан чĕлхепе ятлаçать пулас, тепри хутран ситрен çеç йăваш сасăпа пĕр-ник сăмах хушса илет.

— Офицерпа салтах,—тавçăрса илчĕ Вирьялов.

Канав кукăрĕнче стена çумне лăпчăнса тăнă пирăн вĕсем пире курмаççĕ. Вĕсем хамăр тĕле çитсен Вирьялов сылтăм аллинчи гинжаллă штыка çĕклерĕ те пĕр куç хупнă хушăрах офицерăн кăкăрне чашт! чикрĕ. Çав самантрах эпĕ çĕлĕк тăхăннă салтака пуçĕнчен прикладпа çапрăм. Офицер кĕскен кашкăрнисĕр пуçне ним сасă та кăлармарĕ. Çара кайиччен Атăл çинче грузчикре ĕçлесе пурăннă улăп пек патмар Вирьялов финн салтакне хулпуççи çине çавăрса хучĕ те вăрман еннелле кайса тĕттĕмре çухалчĕ. Эпĕ вилнĕ офицерĕн сумкипе кăсъинчи хутсене кăларса илтĕм те канавран тухма хатĕрлентĕм. Çак вăхăтра ДОТ алăкĕ уçалчĕ. Канава хунар çĕкленĕ çын тухса виçĕ хутчен такама хуллен чĕнчĕ. Чăтса тăраймарăм, винтовкăна çĕклесе тĕллерĕм те ун çинелле персе ятăм. Хунар сӳнчĕ. Анчах эпĕ çирĕм утăм та тарма ĕлкреймерĕм, ДОТ енчен темиçе пулеметпа харăсах мана шырама тытăнчĕç. Виç-тăватă прожектор пĕтĕм уçланкăна çутатма тытăнчĕç. Пурнăç çип вĕççĕн çеç çакăнса тăнă пулин те вăрмана аванах çитсе ӳкрĕм.

— Вирьялов килчĕ-и?—ыйтрăм эпĕ.

— Вăл хăйĕн тупăшĕпе сире кĕтет,—тавăрчĕç мана ыйтăва.

Эпĕ вара, хыçа пĕр отделени хăварса, взводсене каялла чакма хушрăм. Гул çутăлнă çĕре эпир пурте хамăр землянкăсене пĕр сиенсĕр çитсе вырнаçрăмăр.

Правительство Вирьяловпа мана каçхи шырава ăнăçлă ирттернĕшĕн Хĕрлĕ Ялав орденĕсем пачĕ.

* * *

Тавраллах çавăрса илтĕмĕр эпир Выборга. Пирĕн артиллери тăшмана çунтарать. Пурте штурм пуçлама приказ парасса чăтаймасăр кĕтетпĕр.

Выборг — пирĕн тăшмансен килçуртне кĕмелли хапха. Тăван халăхшăн, пулас ĕмĕрсенчи çынсен телейĕшĕн пуçа хума лексен те пурнăçа хĕрхенместпĕр. Пирĕн пĕрттен пĕр ĕмĕт—çав хапхана çапăçса илесси.

История чи çутă дата пулса кĕнĕ март уйăхĕн 12-мĕш кунĕнче нумай кĕттернĕ хыççăн приказ килчĕ. Тĕтĕмпе палкаса ларакан нумай чиркӳллĕ хулана пур енчен те пĕр харăс чи паттăр çарпа чи малта пыракан техника хурçă майкăч ăшне хупса пăвма тытăнчĕ.

Манăн рота тип çĕр çинче çӳрекен хурçă дредноутсем хыççăн хула енелле йĕлтĕрпе вĕçтерме тытăнчĕ. Хĕрнĕ паттăрсем сирпĕнекен минăсемпе çурăлакан снарядсем çине йĕрĕнсе çеç пăхаççĕ. Нимĕнле вăй та тытса чарас çук вĕсен çĕнтерӳллĕ маршне. Вилнисемпе йывăр çуранланнисем кăна хыçала юлаççĕ.

Юлашкинчен танксем хыççăн ансăр урампа хулана кĕрсе кайрăмăр. Шăпкор бандисем чиркӳсемпе балкон тăрринчен çеç пытанса переççĕ.

Пĕр сехет çапăçнă хыççăн площадь патне çитрĕмĕр. Эпир пыракан урама хирĕç площадь лешъенчи виçĕ хутлă тулçурт умĕнче хăйăр чыхса тултарнă пихĕсенчен тунă баррикада пур. Унăн перекен оруди пирĕн малти танка хыптарса илчĕ. Çӳлти люкран кăкăр таран тухнă суранланнă танкист баррикада еннелле виçĕ граната вăркăнтарчĕ те площадь лешъенчен çунтаракан пулемет вуттипе паттăр вилĕмĕпе вилчĕ. Иккĕмĕш танк хăйĕн çулăм айне пулнă юлташĕнчен иртме пуçларĕ. Анчах белофинсен снарячĕ унăн гусеницине те татрĕ. Эпĕ хамăн йĕлтĕрсене хывнă ротăпа баррикадăна танксемсĕрех атакăласлăпчĕ, пулемет вучĕ пире те çĕр çумне лапчăтрĕ.

Çак вăхăтра баррикада хыçĕнчи çуртра гранатăсем çурăлни, пăшал сассисем илтĕнме пуçларĕç. Кĕçех пĕрремĕш хут чӳречинчен улăп пек пысăк çын Хĕрлĕ Ялав çĕклесе тăни курăнчĕ. Çав самантрах ытти чӳречесенчен те красноармеецсем курăнчĕç. Эпĕ Вирьялова палласа савăнса кайрăм.

Чӳречери çынсем малтанах баррикада çине темиçе граната пăрахрĕç, унтан Хĕрлĕ Ялав çĕкленĕ Вирьялов хыççăн çĕре сикрĕç. Пулеметсемпе орудисем шăпланчĕç. Баррикада хыçĕнче çеç çынсем çуйхашни, револьверсем кĕрлетни илтĕнет.

— Ур-ра! Юлташсене çăлма! Ур-ра!—тесе сиксе тăтăмăр та эпир, площадь урлă каçса, баррикада тăрне хăпартăмăр.

Темиçе минута хушши пынă хĕрӳллĕ çапăçура финсен баррикада хӳттинчи роттинче пĕр чĕрĕ çын та юлмарĕ. Эпĕ питĕнчен юн юхтаракан Вирьялова ыталаса илтĕм...

Çапăçу пĕтсен хамăн тусăма госпитальсенче шырарăм, анчах тупасси пулмарĕ. Тепĕр эрнерен хаçатсем Совет Союзĕн геройĕ ятне панă çынсен списокне пичетлерĕç. Унта Вирьялов ятне курсан тем пек савăнтăм.

Иртнĕ эрнере кăна унăн çыруне илсе вуларăм. Вăл Мускавра, çар академинче вĕренет мĕн,—тесе пĕтĕрчĕ хăйĕн калавне аслă лейтенант.

М. КИБЕК.

Краснофлотец юрри

Вĕç-хĕррисĕр пирĕн тинĕс,
Хум чупать çап-çутă, симĕс,
Юрататпăр çут шыва.
Крейсер е линкор, эсминец
Хуралласçĕ çĕршыва.

Эпир сыхă, вăй-хал çирĕп,
Çутă хум, хăюллăн чуп!
Тинĕс айĕн, тинĕс çийĕн,
Тăшмансемшĕн çул-йĕр çук.

Е çил-тăвăл çĕкленет-и,
Хум урса, сиксе кĕрлет-и,
Е хуплать-и шур тĕтре?
Кăнтăрла та, сĕм çĕрле те
Эпир сыхă чикĕре.

Вăй-хал пирĕн вутлă çиçĕм,
Çутă хум, хăюллăн чуп!
Хăть шыв айĕн, хăть шыв çийĕн
Тăшмансемшĕн çул-йĕр çук.

Тĕл перет халь пирĕн тупă,
Ют карапшăн çул-йĕр хупă.
Е ытах хăйса килсен—
Питĕ тĕл тивет торпеда,
Айĕн-çийĕн сирпĕтет.

Хумхансам эс, пирĕн тинĕс,
Ирĕк хум, хăюллăн чуп!
Тинĕс айĕн, тинĕс çийĕн
Тăшмансемшĕн çул-йĕр çук!

Чечеклен хула, уй-хирĕм,
Ус, ĕçле, çĕршывăм пирĕн,
Чикĕ питĕ çирĕп сан.
Пирĕн ĕмĕт, пирĕн ирĕк
Тĕкĕмленмĕ нихăçан.

Хĕрлĕ флот пит сыхă, çирĕп,
Шан, çулпуçăмăр пире,
Тăшмансемшĕн ялан пирĕн
Çул-йĕр хупă тинĕсре.

Василий ВАСЬКИН.

ЕВРОПĂРИ, АФРИКĂРИ ТАТА АЗИРИ ВĂРÇĂ

(Вăрçă ĕçĕсен дневникĕ)

Англипе Германи хушшинчи фронтра пысăк операцисем пулман. Германи командованийĕн сводкинче каланă тăрăх, Германи авиацийĕ Англин груз путтармалли икĕ суднине путарнă тата сутуклăрăн тумалли тепĕр икĕ суднине шиен кăнĕ. Бристоль заливĕнче Германи самолечĕсем Англин хĕçпăшаллантарнă танкерне атакăланă.

Июньĕн 9-мĕшĕнче Англи бомбардировщикĕсем Франципе Бельги çыранĕсем çинчи çар объекчĕсем çине пырса тапăннă. Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, июньĕн 9-мĕшĕнче кăнтăрла Ла-Манш проливĕ тĕлĕнче Англипе Германи истребителĕсем хушшинче сывлăшпи çапăçу пулса иртнĕ. Çак çапăçу çур сехет ытла пынă, çапăçура нумĕçсене парăнтарнă.

* * *

Сурçĕр Африкăра Англи войскисем Германипе Италин Тобрук патĕнчи позицийĕсене хирĕç атака тунă, анчах та, Германи командованийĕн сводкинче каланă тăрăх, англичансен атакине сирсе янă. Итали командованийĕн сводкинче каланă тăрăх, Итали авиацийĕ Тобрукри батарейăсемпе боеприпассен складĕсем çине бомбăсем пырса пăрахнă. Германипе Итали авиацийĕ Тобрукпа Марса-Матрух патĕнчи оборона укрепленийĕсем çине бомбăсем пырса пăрахнă. Англи командованийĕ каларнă коммюникере, Англин Омо юханшывĕ урлă каçнă войскисем çак юханшыв патĕнчен хĕвеланăç еннелле малалла кайса пыраççĕ. Çавăн пекех Гондара районĕнче те çапăçусем пыраççĕ.

* * *

Сирире, çĕршывăн кăнтăр пайĕнче, хаяр çапăçусем пыраççĕ. Гавас—ОФИ агентстви çапла пĕлтерет: Джебель-Друзпа Хермон тăвĕ хушшинче вырнаçса тăракан районра чылаях пысăк вăйсемпе атакăсем тунă, вĕсем хушшинче Сронетанковăй чăссем те нумай пулнă. Çавăн пекех Нахр-Эль-Касимия, Мерджайун, Эль Кунейтра, Шейх Мискин линийĕ çинче те хаяр çапăçусем пыраççĕ.

Англин Сывăхри Хĕвелтухăçĕнчи вăйăсен командованийĕ хăларнă коммюникере каланă тăрăх, Англи войскисем Вăтаçĕр тинĕсĕн çыранĕнче вырнаçса тăракан Сур (Тир) хулине туртса илнĕ, çавăн пекех Нахр-Эль-Касимия юханшывĕ урлă каçнă. Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Англи ушçăсем çавăн пекех Дераапа Мерджайуна туртса илнĕ. Дераа—Сирипе Трансиордани чиккинчи пысăк мар хула, вăл Амманран Дамаска каякан чугунçул çинче вырнаçса тăрать; Мерджайун — Дамаска пытăнчен кăнтăр-хĕвеланăç еннелле 50—60 километрта вырнаçса тăракан пункт.

Франци войскисем Нахр-Эль-Касимия юханшывĕ хыçнелле чакса кайнă, оборонăн тĕп линине — Изра, Шейх Мискин, Эль Кунейтра линине йышăнса тăраççĕ. Çак линипе Бейрут патне пыса кĕмелли вырăнсене хупăлат. Ассошиэйтед пресс агентствин корреспонденчĕ Виширен пĕлтернĕ тăрăх, Франçин Бейрута хупăлекен войскисем çыран тăрăх Палестинăри Бейрута каякан, Акре (Акка) урлă илсе пыракан çула çĕмĕрсе тăкнă.

Рейтер агентствин ятарласа кайнă корреспонденчĕ Англи-Сирири войскисен операцийĕсем пирки çапла пĕлтерет: Англи войскисем виçĕ еннелле наступленипе туса пыраççĕ. Пĕрремĕш колонни — çыран тăрăх Эль-Накура урлă, иккĕмĕш колонни — Хуле кăлăнтăнчи айлăм тăрăх Метула патнелле, виççĕмĕш колонни — Дамаск патнелле пыраççĕ. Çакăнпа пĕр вăхăтрах Англи кавалерийĕ, Франци патрулĕсене çĕмĕрсе тăкас тесе, Сири территорийĕ çине нумай малалла кĕрсе кайнă. Наступленипе туса пыракан войскăсем пысăк çул çинчен пăрăнса, пуринчен ытларах сукмаксемпе усă курса, çĕрлехи вăхăтра малалла кайса пынă.

Англи авиацийĕ Мецц, Нераб (Алеппо çывăхĕнче) тата Райак аэродромĕсем çине бомбăсем пырса пăрахнă. Кунсăр пуçне, Алеппона Дамаскри аэродромсем çине бомбăсем пăрахнă.

Ассошиэйтед пресс агентствин корреспонденчĕ Виширен пĕлтернĕ тăрăх, июньĕн 8-мĕшĕнче Бейрут патĕнчен кăнтăр енче Англи десантне антарса хăварнă тинĕс-çар эскадри халăхи вăхăтра Бейрутпа Триполи районĕнче якорь ярса тăнă. Карапсем çав хулаем çине пеме пуçламан-ха. Агентство шутланă тăрăх, халăхи вăхăтра Англи командованийĕ Бейрутпа Триполине англичансене парасси çинчен каласуçем ирттерет.

Июньĕн 10-мĕш. (ТАСС).

Авиацин юлашки эрне хушшинчи çухатăвĕсем

ЛОНДОН, июньĕн 8-мĕш. (ТАСС). Англири информаци министерстви пĕлтернĕ тăрăх, июньĕн 5-мĕшченхи пĕр эрне хушшинче Сывăхри Хĕвелтухăçĕнче противниккăн 30 самолетне пĕтерсе тăкнă. Англи авиацийĕн 9 самолет пĕтнĕ. Май уйăхĕнче Сывăхри Хĕвелтухăçĕнчи çапăçусенче противниккăн пурĕ 244 самолет пĕтнĕ, кăçалхи çулăн пиррвайхи 5 уйăхĕнче—1.243 самолет пĕтнĕ. Май уйăхĕнче Англи авиацийĕн 65 самолет пĕтнĕ, анчах та летчиксен пĕр пайĕ çăлăнса юлнă.

ЛОНДОН, июньĕн 8-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, июньĕн 6-мĕшченхи пĕр эрне хушшинче Англипе тата Британи утравĕсем çинче Германин 17 самолетне персе антарнă. Германипе тата вăл оккупацинленĕ территорисем çинче Англин 13 самолет пĕтнĕ тата Германин 5 истребителĕпе пĕр бомбардировщикне пĕтерсе тăкнă.

„ССР Союзĕпе туслă тата мирлĕ пурăнмалли общество" руководителĕсене суд тума пуçлас умĕн

ХЕЛЬСИНКИ, июньĕн 10-мĕш. (ТАСС). Июньĕн 4-мĕшĕнче Або (Турку) хулинче Финляндири «ССР Союзĕпе туслă тата мирлĕ пурăнмалли общество» председательне Маури Рюмăна тата çак обществăн ытти чылай членĕсене суд тумалла пулнă, халĕ суд пуçламалли куна июньĕн 16-мĕшне хăварнă. Пуринпĕн те палăнă, çак обществăна 1940 çулти апрель уйăхĕнче организациленĕ. Вăл хăй умне туслăхпа мир никĕсĕ çинче Финляндипе ССР Союзĕ хушшинчи отношенисене лайăхлатас задача лартнă. Çапла пулсан та Финлянди влацĕсем çак обществăна пайтах хĕсĕрленĕ. Общество пухăвĕсене ирттерме чарнă, обществăн нумай членĕсене шыр майсемпе те хĕсĕрленĕ тата арестленĕ. Общество председательне Маури Рюмăна та çавăн пекех тунă вĕсем. Иртнĕ çулти декабрь уйăхĕн вĕçĕнче обществăна ĕçлеме чарнă. Правленин чылай членĕсене, обществăн активлă деятелĕсене тĕрлĕ сроклăха тĕрмене хупса лартмалла тунă, е концентрацилле лагерьсене хупса лартнă. Халĕ ĕнтĕ Маури Рюмăна тата обществăн хăшпĕр членĕсене суд тума хатĕрленеççĕ. Çак ĕçе судăн хупă ларăвĕнче пăхса тухмалла тунă.

Пос-Анжелос районĕнчи авиаци заводĕнчи забастовка

НЬЮ-ЙОРК, июньĕн 10-мĕш. (ТАСС). Юнайтед пресс агентстви Лос-Анжелосран пĕлтернĕ тăрăх, Лос-Анжелос районĕнчи авиаци заводĕнче ĕçлекен рабочисем забастовка пуçланă. Завода войскăсем илсе пынă, винтовкăсемпе хĕçпăшалланнă салтаксем рабочисен пикетĕсене хăваласа салатма пуçланă. Пĕр рабочине амантнă.

Муссолини выступленийĕ

РИМ, июньĕн 10-мĕш. (ТАСС). Стефани агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Итали тăрçа хутшăнăвăнпа çулталăк тултарнă ятпа паян корпоративлă-фашистла палатăн ларăвĕ пулнă. Çак ларура Муссолини пысăк кăмăх тухса калани

Дипломатиллĕ отношенисене татнă

БОРДО, июньĕн 10-мĕш. (ТАСС). Гавас-ОФИ агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Ирак правительстви хăйне Итали хушшинчи дипломатиллĕ отношенисене татнă. Итальянецсене Ирахран 24 сехет хушшинче тухса кайма хушнă.

Черчилль выступленийĕ

ЛОНДОН, июньĕн 10-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, паян общинăсен палатинче премьер-министр Черчилль сăмах тухса калана. Хăйĕн сăмахĕнче вăл юлашки тапхăрта вăрçă операцийĕсемпе, уйрăмăн илсен Крит утравĕ çинчи операцисемпе сыхăнса тăракан ыйтусем пирки пуçланнă преницем çине ответ панă.

КĔСКЕН

● Июньĕн 6-мĕшĕнче çĕрле Японин урлă питех те вăйлă çил-тăвăл иртсе кайнă. Çак çил-тăвăла пула 4.100 çурт пыв айне пулнă, 6 судно путнă. Çавăн пекех тырпул калчисене те пысăк сиен кăнĕ.

● Юлашки темиçе кун хушшинче Египетри портсене Америка парохочĕсем моторсем, машинăсем, çĕркăмăк тата медикаментсем турттарса пынă.

● Бельгин, Чехословакин, Францин, Голландин, Норвегин тата Польшăн Англире пурăнакан подданнăйĕсен, арçынсен 16 çултан пуçласа 65 çула çитнисен тата хĕрарăмсен 16-ран 50 çула çитнисен, полицине пырса регистраци тутармалла тата хăйсем çинчен кирлĕ сведенисене каласа памалла.

● Ганнăри çар судĕ (Франция) Франци тулашĕнче шурăнакан икĕ француза, «государство хăрушăсăрлăхне хирĕçле ĕçсем тунă» тесе айăпласа, вĕлермелле суд тунă. Тепĕр икĕшне ĕмĕрлĕхех каторгăра усрамалла тунă.

ХĔРЛĔ ÇАР ÇЫННИСЕМ

СЕРЖАНТ МАКСИМОВ

Сарлака симĕс улăх. Унăн варрипе тăрă шыв юхса выртать. Хĕвеллĕ кунсенче вăл шыв кĕмĕл пек çутатса курăнать. Улăхăн икĕ еннелле çӳлĕ тусем чăкăлса хăпараççĕ. Хĕвеланăç енче шĕшкĕллĕ вăрман. Çакăн пек илемлĕ вырăна Сормпуç Шĕмшеш ялĕ (Элĕк р.) вырнаçнă. Çак ялта ĕнтĕ пирĕн Леонид Максимов çитĕнсе ӳснĕ. Вăл 1918 çулта çуралнă.

1939-мĕш çул. Кĕркунне. Максимова призыв комиссине чĕнĕ.

...Колхозниксен çурчĕ, икĕ хутлă вăл. Аялти хутне призыв комиссийĕ вырнаçнă. Ана тĕрлĕ лозунгсемпе, плакатсемпе, хĕрлĕ ялавсемпе илемлетнĕ. Âçта кирлĕ унта Ворошилов, Сталин, Калинин, Молотов сăнĕсем, кăранаççĕ. Элĕк ялĕн урамĕсем тăрах призыва кĕркен халлă, паттăр çамрăксем савăнăçлăн утса çӳреççĕ. Хаваслă кулă, юрă кĕвви, хуткупăс сасси урамра вĕçĕмсĕр янăрать. Чăн-чăн ухв, чăн-чăн савăнăçлă кун.

— Максимов! — чĕнĕ призыв комисси председателĕ.

— Эпĕ! — тенĕ Максимов. Вăл призыв комиссин пӳлĕмне кĕнĕ.

Малтанах унăн сывлăхне тĕрĕсленĕ.

— Сывă, — пĕлтернĕ врач юлашкинчен.

— Сирĕн Уйрлĕ Çар ретне каяс килет-и? — ыйтнă комисси председателĕ.

— Каяс килет! — çирĕплĕн ответленĕ Максимов, комисси умне пырса тăрса.

Призыв комисси председателĕ ăна Хĕрлĕ Çар ретне илни çинчен пĕлтернĕ. Максимов, тавçантапах ун çинчен ĕмĕтленекенскер, калама çук савăннă. Унăн чĕри хĕрӳллĕн те тĕреклĕн тапма тытăннă.

Ноябрĕн 26-мĕшĕ.

Çак кун Максимовăн хуранташĕсемпе ял çыннисем ăна Хĕрлĕ Çар ретне кăтартă.

Вĕренӳри хĕрӳллĕ кунсем. Тин çеç Хĕрлĕ Çар ретне килнĕ çамрăксем çар ĕçне пысăк тимлĕхпе вĕренеççĕ.

Вĕренӳн малтанхи кунĕсенчех Максимов пулемета юратрĕ. Çавăнпах-и тен вăл хирте е класра занятисем ирттернĕ чухне хăйĕн пĕлӳлĕхĕпе, пултарулăхĕпе ыттисенчен палăракан пулса кайĕ. Юлташĕсем часах вăл çирĕп дисциплинăллине, ĕçлĕхлине туйса илчĕç.

Ăна кĕçĕн командирсем хатĕрлекен шкула куçарчĕç. Унта вăл çав пĕтĕм чĕререн тăрăшса вĕренчĕ. Шкулта 3 уйăх вĕреннĕ хыççăн, вĕренӳре яланах малта пынине тата командир ятне илме тивĕçлине шута илсе, ăна кĕçĕн сержант званине панĕç. Вăл отделенине ĕçлеме тытăнчĕ.

Отделени командирĕ çине партине правительство пысăк ответлăх хурать. Отделени çирĕп пĕлӳлĕхлĕ, дисциплинăллă, хăюллă пулласси пĕтĕмпех унтан килет. Çакна Максимов яланах асра тытрĕ. Вăл, хăйĕн ĕçне чĕререн юратнине пула, отделени умне татăклă задача кăларса тăратрĕ: отделенине малти вырăна кăлармалла.

Унтанпа чылай вăхăт иртрĕ. Максимовăн отделенийĕ юлашки вăхăтсенче лайăхран та лайăх тĕслĕхсем кăтартма тытăнчĕ. Ун çинчен подразделенине тата полкра та каласăма тытăнчĕç. Максимов ячĕ анлăран та анлă сарăлса пычĕ. Унăн авторитечĕ хăпарчĕ.

* * *

Каç. Тĕттĕм. Сарлака, симĕс улăхри шыв хĕррине ларса тухнă шурă палаткăсем кăшт çеç курăнса лараççĕ. Палаткăсенче красноармеецсем лăпкăн сывăраççĕ. Шăп. Хутран-ситрен кăна палаткăсем умĕнче утса çӳрекен дневальнăйсен ура сасси илтĕнсе каять.

Сасартăк сигнал сасси каçхи шăплăха çухатрĕ. Тревога. Палаткăсенчен красноармеецсем пĕрин хыççăн тепри чупса тухма тытăнчĕç. Шавламаççĕ вĕсем, пурте шăпăн ĕçлеççĕ.

Нумай та вăхăт иртмерĕ, подразделени кăтартнă вырăна тухса тăчĕ. Кунта уйрăмăнах Максимов отделенийĕ лайăх тĕслĕхсем кăтартрĕ. Унăн отделенийĕ строя ыттисенчен чи малтан тухса тăчĕ.

Подразделени шăпăн малалла шăвăнчĕ. Пилĕк километр таран утнă хыççăн, çулăн сулахай енчи пĕр пĕчĕк вăрмана кĕрсе чарăнчĕ.

...Приказ кĕскен те татăклăн пулчĕ.

— Максимов отделенийĕ сылтăм енчен лайăх вырăн суйласа илмелле те оборона йышăнмалла, Н хули çине тапăнса килекен «противника» малалла куçма май памалла мар...

Приказа Максимов кирлĕ пек ăнланчĕ. Вăл, хăй отделенийĕ патне йăлтăнса пырса, ăна сулахай енчи çӳлĕ вырăн çине ертсе кайрĕ. Унта хăйсен задачи çинчен красноармеецсене ăнлантарса пачĕ.

Часах хĕрӳллĕ ĕç пуçланчĕ. Максимов кăтартса панă тăрăх красноармеецсем окопсем чавма тытăнчĕç. Вĕсенчен хăшпĕрисем пулемет валли, теприсем наблюдатель валли окопсем чаваççĕ, ыттисем маскировкăсем валли кирлĕ япаласене хатĕрлеççĕ...

— Юлташ командир, окопсем хатĕр! — пĕлтерчĕ наводчик.

Максимов ĕçе тĕрĕслерĕ. Окопсене кирлĕ пек пĕлсе тунă. Вĕсене пĕлмен тата курман çын пыраса тупас çук.

Анчах ку Максимовăн чĕрине лăплантармарĕ.

— Кунпах ĕç пĕтмен-ха пирĕн, — терĕ вăл юлташĕсене, — тумаллисем татах та пур. Вăрçăра чеелăх пысăк вырăнта тăрать. Пирĕн чее пулма вĕренмелле. Пирĕн умра çакăн пек задача: çак юханшыв урлă каçса 500 метртан çывăхра мар вăрман хĕрне «противника» курăнмалла суя окопсем тумалла, унта çын евĕрлĕ фигурăсем туса лартмалла.

— Шыв урлă каçмалли çук, — терĕ пĕри, шыв урлă çăмăллăн каçма кĕпер çуккине туйса илнипе.

— Шыв урлă утса каçма пулать. Пĕтеннинчен хăрама кирлĕ мар. Пирĕншĕн нимĕнле йывăрлăх та çук, эпир чăн-чăн вăрçăри пек пулмалла. Ун çинчен Оборона Халăх Комиссарĕ Тимошенко та лайăх каласа панă, — ăнлантарчĕ Максимов.

Максимов кăтартса панине красноармеецсем ăнăçлăн пурнăçларĕç.

Ирхи шуçăм çутатса хăпарма тытăнă вăхăтра «противник» наступленине тума тытăнчĕ. «Противник» пысăк тимлĕхпе вĕсен еннелле туланса килет.

«Противник» вĕсем патне çывхарса çитрĕ. Анчах вăл вĕсене асăрхамарĕ. Çавна пула курăнса выртакан суя окопсем еннелле пăрăнчĕ. Суя окопсем патне çывхарса çитес умĕн Максимов команда пачĕ:

— Огонь!

Пулемет кĕрлеме тытăнчĕ.

— Тра-та-та! — кĕрлет холостой патрон сасси.

— Тра-та-та!..

Хĕвел тӳпене сарăлса хăпарсан заняти пĕтрĕ. Занятинче пысăк пултарулăх кăтартнăшăн отделенине подразделени командирĕ пысăк тав турĕ.

Максимов вĕренӳре отличник шутланать. Занятисенче хăй çеç те мар, унăн отделенийĕ те паха тĕслĕхсем кăтартать. Çавăнпăн вăл тата унăн отделенийĕ пĕрре çеç мар благодарность, премси илнĕ. Çавăнпăн ăна «Отличник РККА» значокĕ панă.

— Тăшманпа çапăçма тӳрĕ килсе тухсан, — тет Максимов, — пирĕн пулемет кирлине тăвĕ. Вăл, çутă çава курăксене касса тăкнă пек, тăшманăн пуçĕсене касса тăкĕ. Иккĕленмелли çук, эпирех çĕнтерӳ тумалла.

Çакăн пек хăюллă тата примерлă пулнăшăн ăна сержант званине параççĕ.

Хĕрлĕ Çар — тĕнчери чи вăйлă çар. Унăн боецĕсем, командирĕсем пултарулла, хăюллă. Вĕренӳре вĕсем халама çук паха тĕслĕхсем кăтартаççĕ. Максимов пек командирсем Хĕрлĕ Çарта темиçе пиншерĕн шутланаççĕ. Вĕсем, паллах, тăшманпа çапăçма тӳрĕ килсе тухсан, татах геройла тĕслĕхсем кăтартĕç. Вĕсенчен татах чылай çĕнĕ геройсем шăтса тухĕç. Çав геройсенчен пĕри сержант Максимов пулĕ.

Сержант Ф. ФИЛИППОВ.

Украина ССР.

Кутузовăн халиччен пичетленмен çырăвĕсем

1812 çулта тăван çĕршывăн пынă вăрçă кунĕсенче гениллĕ полководец фельдмаршал М. И. Кутузов хăйне сывăх çынсем патне çырусем нумай çырнă. Анчах та шел, Кутузовăн питех те нумай çырăвĕсене халиччен те шыраса тупайман-ха.

Нумаях пулмасть Мускавра авалхи актсен центральнăй архивĕ фельдмаршал П. В. Чичагов адмирал патне янă, халиччен пичетленсе тухман 50 çырăва тупнă. Çырусене 1812 çулти августпа 1813 çул пуçламĕшĕ хушшинче çырнă.

Çак çырусем истори енĕпе интех те хаклă документсем пулса тăраççĕ. Вĕсенче хашнинчех Кутузов вырăс çарĕпе Франци çарĕ хушшинчи çапăçусем мĕнле пыни çинчен тĕплĕн каласа парать, вырăс халăхĕн патриотла аслă движенине хаклать. «Пирĕн партизансен çитĕнĕвĕсем,—тесе çырать фельдмаршал Чичагов патне 1812 çулти октябрĕн 2-мĕшĕнче (кивĕ стильпе),—сехетрен сехете чаплăланса пыраççĕ... Çавăн пекех пирĕн хресченсен чаплă вĕçĕсем çинчен каласа пама та маншăн питĕ кăмăллă, вĕсем хăйсем тăван çĕршывăн чăн-чăн ывăлĕсем пулнине кăтартаççĕ тата, противник темĕнле чее вĕçсем тăвать пулсан та, ăна мĕнпур çапăçусенче çĕмĕре-çĕмĕре тăкаççĕ».

Нумай çырусенче Франци çарне çĕмĕрсе тăкни çинчен, вăл Россипăран каялла пĕр йĕркесĕр чакса кайни çинчен каланă. 1812 çулти октябрĕн 28-мĕшĕнче çырнă, Ельнирен янă çырура Кутузов çапла пĕлтерет: «27-мĕш числара Духовски çул çинче тараканн противника хуса ситсе, казаксем унăн тăваттăмĕш корпусне çĕмĕрсе тăкнă, Сансон генерала тата пĕчĕк чинсене 3.500 çынна тытăкăна илнĕ... Противник нимĕн йĕркесĕр тарать». Ноябрĕн 3-мĕшĕнче çырнă тепĕр çыру та Россия территорийĕ çине тапăнса кĕнĕ интервентсем йывăр пораженисем тӳсни çинчен каласа парать. «Çапăçура противнике калама çук пысăк çухатусем кӳреççĕ. Унăн, октябрĕн 6-мĕшĕнчен шутласан, тĕп çара хирĕç пуçланă тĕрлĕ ĕçсенче 234 тупă пĕтнĕ, ку шута генерал Витгенштейн туртса илнисем кĕмеççĕ-ха... Вилнисемпе аманнисем те питĕ нумай».

Июньĕн 9-мĕш. (ТАСС).

Кроса хатĕрленеççĕ

ВĂРНАР. Ялхуçалăхĕн вăтам шкулĕнче вĕренекенсем профсоюзпа комсомол кросне хатĕрленме тытăнчĕç. Вĕренекенсене кросс положенийĕпе паллаштарнă. Шкулта 6 команда тунă. Вĕсенчен виççĕшĕ — арçын ачасен, ытларах хĕрарăмсен командисем. Кашни командăна ертсе пыма командирсем уйăрнă. Ултă командăра 60 çын шутланса тăрать. Командăсем тренировкăсене йĕркеллĕ ирттерме пуçăннă.

П. СОРОКИН.

Июньĕн 8-мĕшĕнче Шупашкарти «Медик» стадионĕнче хĕрарăмсен пысăк шведски эстафетăллă ăмăртусем пулса иртрĕç. Ăмăртусенче «Буревестник» команди çĕнтерчĕ. УКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: спорт мастерĕ М. Гущина дистанцире.

А. КОСТИН фото-ӳкерчĕкĕ.

▲ ▲ ▲

ФЗО шкулĕсенче вĕренме 160 çамрăка илнĕ

ИШЛЕЙ. Июньĕн 5—7-мĕшĕсенче ФЗО шкулĕсене вĕренме илес тĕлĕшпе призыв комиссийĕ ĕçлерĕ. Колхоз çамрăкĕсем комиссине хĕрлĕ ялавсемпе ушкăнăн-ушкăнăн килчĕç. Июньĕн 6-мĕшĕнче комиссине чи малтан Эндимер ялсоветĕнчи «Чăваш Коммуни» колхоз çамрăкĕ И. Петров юлташ кĕчĕ.

Ун хыççăн комиссине «Комбайн» колхозран пиччĕшĕпе шăлнĕ—В. Сергеевпа Е. Сергеев юлташсем кĕчĕç. Вĕсем иккĕшĕ те шкулта отлично паллăпа вĕреннĕ. ФЗО шкулне илме йышăнни çинчен пĕлтерсен, иккĕшĕ те тем пекех савăнчĕç, ФЗО шкулĕнче те отлично вĕренсе, пысăк квалификацилле рабочисем пулса ĕçлеме сăмах пачĕç. Призыв комиссийĕ, хăйĕн ĕçне вĕçлерĕ. ФЗО шкулĕсене вĕренме ăна 160 çамрăка илнĕ.

А. ТИМОФЕЕВ.

Обязательствăна пурнăçлаççĕ

ÇЕМЕРЛЕ. (**Чăваш Коммуни» корр.**). Древкомбинатри 5-мĕш номерлĕ цехри рабочисем дзержинецсен чĕнĕвне ответлесе, май тата июнь уйăхĕсенче ĕç нормине 150 процентран кая мар тултарса ĕçлеме пулнă.

Коллектив илнĕ обязательствăна ăнăçлăн пурнăçласа пырать. Май уйăхĕнче вăтамран илсен кашни рабочи нормăна 150 процент тултарнă. Уйрăм рабочисем татах та лайăхрах ĕçленĕ. Сăмахран, слесарь Василий Красношеков уйăхри нормăна 524 процент, Сергей Сазонов—182 процент, Семен Кабанин, Сергунин юлташсем 175 процент тултарнă.

ПУЛНИ-ИРТНИСЕМ

Шупашкарти тугунçул станцинчи товарнăй конторăн кассирĕ Г. Устинов 1940 çул вĕçĕнче Е. Мурзаковăна качча илсе унпа пурăнма пуçланă. Устинов арăмĕнчен часах машăллама пуçланă, килне ӳсĕр таврăнса ăна хĕнеме тапратнă.

Çапла, нумай пулмасть каçхине килĕ ӳсĕр таврăнсан, Устинов арăмне вĕлерме шут тытнă: темиçе вырăнтан çĕçĕпе чиксе суранлатнă, вара чӳрече витĕр пахчана кăларса ывăтса, хĕнеме пуçланă. Кăшкăрнине илтсе чупса пынă кӳршисем çеç Мурзаковăна вилĕмрен хăтарнă.

Питĕ йывăр амантнă Мурзаковăна больницăна ăсатнă. Устинова арестлесе суда панă.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

ПРОГРАММА РАДИОПЕРЕДАЧ

Ст. РВ -74, в. 943 м., вр. местное. **16 июня.** 20.30—Концерт-беседа: „Композитор С. С. Прокофьев". 21.00—Лекция в помощь изучающим марксизм-ленинизм: „Учение Ленина и Сталина о социализме и коммунизме". **17 июня.** 18.45—Оборонный выпуск „Последних известий". 21.30—Лекция в помощь изучающим историю ВКП(б): „Борьба за создание большевистской партии".

Все передачи идут на чувашском языке.

Вурнарский зооветтехникум

об'являет прием учащихся на 1941—42 учебный год.

Техникум готовит: 1) зоотехников средней квалификации и 2) помощников ветеринарных врачей.

В техникум принимаются граждане СССР в возрасте от 15 до 35 лет.

Все поступающие подвергаются приемным испытаниям в об'еме неполной средней школы по математике, русскому языку, физике, Конституции СССР и чувашскому языку.

Окончившие 6-ой или 7 классов средней школы с аттестатом отличника принимаются в техникум без приемных испытаний и зачисляются на стипендию.

Заявления и даются на имя директора, приложить следующие документы в подлинниках: 1) о рождении, 2) об образовании, 3) о состоянии здоровья и прививке оспы, 4) две фотокарточки, заверенные госучреждением и собственноручной подписью, 5) справка об отношении к воинской обязанности (для военнообязанных), 6) почтовые марки на 60 коп.

Прием заявлений производится с 1 июня по 18 августа, приемные испытания производятся с 19 по 28 августа. Начало занятий с 1 сентября.

Учащиеся обеспечиваются общежитием и постельными принадлежностями. При техникуме имеется столовая

Техникум имеет хорошо оборудованные кабинеты, учебное хозяйство и т. д.

Плата за обучение и стипендия устанавливаются на общих основаниях.

АДРЕС: пос. Вурнары, Чувашской АССР, Зооветтехникум.

3—1 ДИРЕКЦИЯ.

ЧУВАШСКАЯ РЕСПУБЛИКАНСКАЯ ПОЛИТИКО-ПРОСВЕТИТЕЛЬНАЯ ШКОЛА

об'являет прием учащихся на I, II и III курсы на 1941—42 учебный год.

Политико-просветительная школа является средним специальным учебным заведением с трехгодичным сроком обучения, готовящим квалифицированных политико-просветительных работников: заведующих и инструкторов районных домов культуры, инспекторов районных отделов народного образования, заведующих избами-читальнями и колхозными клубами.

В политико-просветительную школу принимаются лица в возрасте от 16 до 35 лет, имеющие образование в об'еме неполной средней школы.

Все поступающие в политико-просветительную школу подают заявления с 1 июня по 20 августа на имя директора школы с приложением следующих документов а) свидетельство о рождении, б) свидетельство об образовании, в) справку врача о состоянии здоровья, г) двух фотокарточек с собственноручной подписью на них.

Поступающие в политико-просветительную школу подвергаются приемным испытаниям в об'еме программы неполной средней школы по следующим предметам: а) русскому языку (письменно и устно), б) математике (письменно и устно), в) географии (устно), г) Конституции СССР (устно), д) родному языку (письменно и устно).

Приемные испытания проводятся с 16 по 26 августа включительно.

Лица, желающие поступить на II и на III курс политпросветшколы, подвергаются испытаниям за предыдущий курс по всем предметам.

Из числа лиц, выдержавших приемные испытания, то-есть получивших оценки по всем предметам не ниже „посредственно", в первую очередь принимаются лица, имеющие опыт политпросветработы и получившие наиболее высокие оценки.

Отличники НСШ принимаются в политпросветшколу без испытаний с зачислением на стипендию.

Лица, сдавшие испытания в политпросветшколу, на 2/3 оценок „отлично" и 1/3 „хорошо", зачисляются на стипендию в размере 200 руб. в месяц и обеспечиваются общежитием.

За обучение в политико-просветительной школе вносится плата в соответствии с установленной платой за обучение в средних специальных учебных заведениях.

Заявления направлять по адресу: гор. Чебоксары, Чувашской АССР, ул. Аптечная, дом № 3, Политпросветшкола, директору.

2—1 ДИРЕКЦИЯ.

Вниманию руководителей колхозов и колхозных почтальонов!

Наркомзем СССР издает ряд сельскохозяйственных журналов. Успешное распространение этих журналов среди колхозников поможет усвоению агротехники, лучшей организации борьбы за получение высокого Сталинского урожая. Рекомендуем организовать массовую работу по распространению сельскохозяйственных и республиканских журналов.

Название журналов	Стоимость 3 мес.	6 мес.
Колхозная товарная ферма	1—50	3—00
Колхозное производство	3—00	6—00
Сады и огороды	4—50	9—00
Ленин çулĕпе	3—00	6—00
Çунтал	3—00	6—00
Ĕçхĕрарăмĕ	1—50	3—00
Хатĕр пул (лимит)	—90	1—80
Илемлĕ литература (кварт.)	3—00	6—00

Наркомзем ЧАССР.
Управление связи ЧАССР.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редактор заместителĕн — 3—97, редакци секретарĕн — 4—40, пропаганда пайĕн — 4—97, парти пурнăç пайĕн — 7—97, экономика пайĕн — 0—88, сырусемпе рабселькорсен пайĕн — 2—30, «Ĕçхĕрарăмĕ» тата «Хатĕр пул» журналсен — 6—23, «Ленин çулĕпе» журналăн — 0—85, издательство конторин—0—23.

НТ 2496. Гор. Чебоксары, типография № 1 Управления издательств и полиграфии при СНК ЧАССР, Заказ № 293. Ф. б. 58 84 п. л.